ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЧĂВАШ ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

174 (9853) №

1956 çулхи августăн 25-мĕшĕ, шăматкун

Хакĕ 20 пус. 39-мĕш çул тухать.

Вăрлăх фончĕсене халех хывса хăварар

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ ялхуçалăх умне пысăк задача—кашни 100 гектар çĕр пуçне ялхуçалăх продукчĕсем туса илессине татăклăн ÿстерес задача лартрĕ. Çак задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре колхозсемпе совхозсенче вăрлăх туса илессине тĕрĕс организациленин пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать.

Вăрлăх акса тăвас ĕçе тĕрĕс йĕркелемесĕр ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне кирлĕ пек ÿстерме май çук. Çакна республикăра малта пыракан колхозсен опычĕ лайăх çирĕплетсе парать. Районсенче акма палăртнă пахă сортлă вăрлăхсем акнă участоксенче, ваьль вăрлăх акнă лаптăксемпе танлаштарсан, ытлашши ĕç вăйĕ хумасăрах 20—30 процент таран нумайрах тырпул туса илме пулать. Сăмахран, Кунакинăри вăрлăхсене тĕрĕслесе пăхма акнă участокра «Торсдаг» пăрçа кашни гектар пуçне, ытти участоксемпе танлаштарсан, 9 центнер ытларах тухнă. Лайăх вăрлăх акса хăварнă чылай колхозсем халĕ пысăк тухăçлă тырпул туса илеççĕ.

Вăрлăх акса тăвас ĕçе лайăхлатас, çитес çулхи тырпулшăн тăрăшас тесен, халех мĕнпур колхозсенче вăрлăх фончĕсене хывса хăвармалла. Вăрлăх çинчен çуркунне, çурака умĕн мар, халĕ, тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра, шухăшламалла. Вăрлăх фончĕсене пахă вăрлăхсем хывса хăварассишĕн ялхуçалăхĕнчи ответлă ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Анчах чылай çĕрте ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес ĕçре тасса сортлă вăрлăх пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илесшĕн мар. Хăшпĕр колхоз, МТС руководителĕсем вара çак ĕç çине ытла та тимсĕррĕн пăхаççĕ. Республикăри уйрăм колхозсенче кăçалхи çуракинче ялăх сортлă, шăтман вăрлăх акнине колхоз тата МТС руководителĕсем вăрлăх хатĕрлес ĕçри ответлăха сухатнипе кăна ăнлантарса пама пулать. Çапла, сăмахран, Сĕнтĕрвăрри, Советски, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски районĕсенчи колхозсенче кондицие ларман вăрлăх акнă, Кувакино тата Пăрачкав районĕсенче вара пур колхозсенче те шăтма юрăхсăр вир вăрлăхне акса хăварнă. Етĕрне, Чурачăк, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенче пĕтĕм сĕлĕн виçĕ пайĕнчен пĕр пайне япăх сортлă вăрлăхпа акнă. Çакăнпа малашне килĕшсе тăма çук. Колхозсенче лайăх сортлă вăрлăхсем тăвасси государство ĕçĕ пулса тăни çинчен район руководителĕсем ăнланма тивĕç.

Халĕ чылай районсенче тĕштырă пухса кĕртес ĕç вĕçленсе пырать. Нумай колхозсем, государствăна тырă памалли плана тултарнине пĕрлех, чи лайăх сортлă тырра вăрлăх фончĕсене хываççĕ. Муркаш районĕнчи «Аврора», «Динамо», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем, Советски районĕнчи «Звезда», Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем государствăна тырă парса татнă хыççăнах пĕтĕм вăрлăх фончĕсене хывса хăварнă. Анчах вăрлăх фончĕсем хывас ĕç пур çĕрте ăнăçлă пулса пымасть-ха.

Вăрлăх фончĕсене хывас ĕçе пĕр кунлăха та кая хăвармалла мар. Çав фондсене лайăх тасатнă, типĕ, сорт тĕлĕшĕнчен чи пахă тырра çеç хывмалла. Колхозсенче вăрлăхлăх хывма юрăхлă тырă çук пулсан, ăна ытти колхозсенчен районта акма палăртнă сортлă вăрлăхпа улăштарса илмелле. Вăрлăх акса тăвассине лайăхлатас ĕçре райсемхозсем пысăк вырăн йышăнмалла. Вĕсем колхозсене пысăк пахалăхлă вăрлăх парса тăма тивĕçлĕ.

Чи лайăх сортлă таса тырăпа колхозсенчи вăрлăх фончĕсене çителĕклĕ таран тата вăхăтра хывса хăварассине лайăхлатма правительство тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Вăрлăх фончĕсене чи малтанах вăрлăхлăх акнă участоксенчен пуçтарса кĕртнĕ тырра хывмалла. Çавăн пек участоксенчен пуçтарса илнĕ тырă вăрлăхлăх хăварма çитмест е пĕр-пĕр сăлтава пула акма юрăхсăр пулсан, государствăна тырă памалли плана тултаричченех, чи лайăх участоксенчи тырра вăрлăх фончĕсене хывма юрать. Çавăн пек фондсене кашни колхозра тырă пухса кĕртме тухнă вăхăтран пуçласа пĕр уйăхран кая юлмасăр туса çитермелле.

Акма уйăрнă вăрлăхсăр пуçне кашни колхозрах страховой фонд тумалла. Çав фонда ялхуçалăх артелĕн Уставĕпе пăхнă чухлĕ тырă хывмалла.

Пирĕн республика условийĕсенче кĕркунне акакан тырăсем валли çултан-çула куçса пыракан фондсем туни лайăх. Колхозсенче çавăн пек фондсем туни кĕртырпине вăхăтра акса хăварма тата вĕсен тухăçлăхне ÿстерме май парать. Страховой фондсене тата çултан-çула куçса пыракан вăрлăх фончĕсене те вăрлăхлăх акакан участоксенчи тырра хывмалла; çавăн пек тырăсем çитмесçĕ пулсан, государствăна тырă памалли плана тултарнă хыççăн ытти участоксенчен пухса кĕртнĕ тырра уйăрмалла.

Вăрлăх фончĕсем тăвас ĕç пĕтĕмпех колхоз тата машина-трактор станцийĕсен руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсенчен килет. Вĕсен, правительство туса панă условисемпе усă курса, вăрлăх туса илес ĕçе лайăхлатмалла, вăрлăх тата страховой фондсене вăхăтра хывса хăварма тăрăшмалла.

Халĕ уйрăмах вăрлăхлăх акнă участоксенчи тырра пухса кĕртес ĕçе лайăх ирттермелле. Çав участоксенчи тырра вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртсе типĕ çанталăкра çапмалла. Вăрлăхлăх хăвармалли тырра лайăх тасатмалла тата типĕтмелле. Иртнĕ çулсенче хăшпĕр çĕрте çакăн пек йăла та пулнă: вăрлăхлăх акнă участоксенчи тырра ытти участоксенчи культурăсене пухса кĕртнĕ хыççăн тин пухма тытăннă, каярах юлса çапнă, çапла вара вăрлăх фончĕсене тасатман, нÿрĕ тырă хывса хăварнă. Çавăн пек пуласран кăçал хытă сыхланмалла.

Вăрлăх фончĕсене хывма колхозсенче чи лайăх кĕлетсем уйăрмалла, вĕсене малтан лайăх тасатса дезинфекцилемелле. Вăрлăхлăх хăварнă тырă сорчĕсене хутăштарма пулмалла мар. Акма хăварнă тырра урăх çĕре расходлакансене çирĕп ответ тыттармалла.

Партипе правительство колхозсенче вăрлăх фончĕсем тăвас ĕçе пысăка хурса хаклаççĕ. Партин XX съезчĕ улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă Директивăсем вăрлăхсем тăвас ĕç юлса пынине хăвăртрах пĕтерме хушаççĕ. Съезд панă Директивăсене пурнăçласа, ялхуçалăх органĕсен, партипе совет организацийĕсен, МТС-семпе колхоз руководителĕсен тата мĕнпур ялхуçалăх работникĕсен вăрлăх акса тăвас ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла. Ку ĕçре уйрăммăнах ялхуçалăх специалисчĕсен ответлăхне ÿстермелле. Парти райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен колхозсенче вăрлăх хатĕрлес ĕç мĕнле пынипе куллен интересленмелле, райсемхозсен ĕçне тишкерсе тăмалла. Кашни колхозăн хăй валли хăйĕн уй-хирĕнчех çителĕклĕ чухлĕ пахă сортлă вăрлăх туса илме тăрăшмалла. Государствăран кивçен вăрлăх илсе пурăнас йăлана пăрахăçа кăларма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ.

Кăçал кашни колхозра пур тĕрлĕ ялхуçалăх культурисем епĕпе те пахă сортлă вăрлăх çителĕклĕ таранах хывса хăварар.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Финляндире

ХЕЛЬСИНКИ, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов паян Финлянди Республикин столицинчи пысăк вырăнсемпе паллашнă. Финлянди Республикин президенчĕпе У. Кекконенпа пĕрле К. Е. Ворошилов Финлянди парламенчĕн çуртне пăхса çÿренĕ, Финляндин Наци музейне пырса курнă.

Парламент çуртĕнче СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне К. Е. Ворошилова тата унпа пĕрле пынă çынсене парламент председателĕ В. И. Сукселайнен, унăн заместителĕсем В. Лескиненпа Т. Куула, ялахи комиссисен членĕсем, парламентри фракцисен председателĕсем саламланă. Государство залĕнче парламент председателĕ В. И. Сукселайнен К. Е. Ворошилова чысласа çакăн пек сăмах каланă:

Хисеплĕ господин—Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ, хисеплĕ господин—Республика Президенчĕ!

Эсир пирĕн çĕршыва тата çак çурта килнĕ май Сире, Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ господин, Финлянди парламенчĕ ячĕпе чĕререн саламлама ирĕк парсамăр. Юлашки çулсенче пирĕн çĕршывсен парламенчĕсен делегацийĕсем пĕр-пĕрин патне пырса çÿрерĕç, Финляндипе Совет Союзĕ хушшинчи ытти нумай ĕçсене хутшăнчĕç. Çапла çыхăнса ĕçлени пире пурсăмăра та савăнтарать. Совет государствин çак çуртра хăналанакан пуçлăхне парламент уйрăмах ăшă кăмăлпа саламлать. Парламент çурчĕ пирĕн демократиллĕ государство стройĕн символĕ пулса тăрать. Эсир пирĕн çĕршыва сума суса килни вăл мирлĕ тата пĕр-пĕрне ăнланса пурăнас тĕлĕшпе питĕ пысăк çĕнĕ утăм тунине пĕлтерет.

Финлянди халăхĕн правительстви — пурне те тивĕç тата пĕр тан суйлав прави тăрăх суйланă парламент—кăçал 50 çул тултарать. Пирĕншĕн, вĕтам çула çитнĕ çынсемшĕн, çак вăхăт вăрăм пек туйăнать. Анчах та, Сирĕн, Президент господин, пурăнăçри событисене аса илсе, эпир çакна ăнланатпăр: çак пĕтĕм вăрăм вăхăт, пирĕн шутпа, Эсир Финляндие пĕррремĕш хут килнĕренпе халĕ киличчен иртнĕ çулсем хушшинчи тапхăр пулса тăрать. Пирĕн парламент реформи 1905 çулхи событисен результачĕ пулса тăрать. Çакă вăл Эсир, Президент господин хăвăр çĕршывăн шалти условийĕсене аталантарассишĕн пурнăçласа пынă кĕрешÿпе тÿррĕнех çыхăннă. Совет государствин пуçлăхне Финляндире тата унăн парламенчĕн çуртĕнче пĕррремĕш хут саламлама май килнĕ чухне пире çакă уйрăмах савăнтарать: эпир Сире, хамăрăн хисеплĕ хăнана кунта саламлама, çапла вара Финляндипе Россия халăхĕсем демократишĕн çур ĕмĕр каялла пĕрле тăрăшнине çĕнĕрен аса илме пултаратпăр.

Эсир Финлянди парламенчĕн çуртне килнĕ ятпа Сире, Президент господин, чĕререн саламлама ирĕк парсамăр. Сире ырă сунса йышăнатпăр!

Финлянди парламенчĕн председателĕ саламласа калани çине ответлесе, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов çапла каланă:

Финлянди Республики парламенчĕн хисеплĕ председателĕ!

Финлянди парламенчĕн çуртне килсе курнă вăхăтра Эсир мана тата манпа пĕрле çÿрекен çынсене ăшă кăмăлпа саламланăшăн Сире пĕтĕм чĕререн тав тăватăп. Эпĕ Финляндире çур ĕмĕр каялла пулни çинчен Эсир каланă сăмахсене илтме мана питĕ кăмăллă пулчĕ. Ун чухне эпĕ Сирĕн çĕршыва Луганскри рабочисен представителĕ пулса килнĕччĕ. Эпĕ Сире, Председатель господин, çапла каласшăн: çав вăхăтра мана Финляндири рабочисем тĕлĕнмелле ăшă кăмăлпа йышăннăччĕ. Вĕсем ытханлă патша режимне хирĕç пирĕнпе пĕрле паттăррăн кĕрешрĕç.

50 çул каялла Финлянди парламенчĕ çурални вăл 1905 çулхи событисен результачĕ пулнă тесе эсир тĕрĕс каларăр. Вăл, паллах ĕнтĕ, массăсем патша самодержавине хирĕç уççăнах кĕрешнипе тÿррĕнех çыхăнса тăнă.

Халĕ эпĕ çакна палăртасшăн: ĕçхынисен аслă учителĕ тата çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин 1905 çулхи революцичченех нумай малтанах Финлянди халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешÿре тунă кашни çĕнтерĕве хĕрÿллĕн саламланă, патша влаçĕн Финляндири пусмăрла, русификаторла политикине тăрă шыв çине кăларнă. Кунта, сăмахран, çакна аса илтерни те çителĕклĕ: патша правительстви 1899 çулта манифест кăларса Финлянди сеймне унăн питех те кирлĕ прависенсĕр тăратса хăварсан, 1901 çулта кăларнă закон тăрăх Российăри пурне те тивĕçлĕ çар повинноçне Финляндире те пурнăçласа пыма тытăнсан, Владимир Ильич Ленин çапла çырнă: «1899 çулхи февралĕн 3-мĕшĕнче кăларнă манифест тата 1901 çулта йышăннă закон вăл—законлă мар ĕçсем пулса тăраççĕ, çакă вăл хăйсем тупа туса каланă сăмаха улăштарнă ирĕр çынсен шайкки, патша правительстви тенĕскер, ирĕксĕрлесе тунă ĕç пулса тăрать».

Халĕ Финлянди Республикин хисеплĕ президенчĕ Кекконен господин чĕнипе мана Финлянди халăхĕ çав тери хапăл туса хăналать. Эпĕ тата мана пĕрле килнĕ çынсем çакна çирĕппĕн шанса тăратпăр: эпир Финляндие килни, çак вăхăтра пĕр-пĕрине тÿррĕнех çыхăнса калаçни пирĕн икĕ çĕршыв халăхĕсен ырлăхĕшĕн Совет Союзĕпе Финлянди туслăхне малалла аталантарса çирĕплетме пулăшĕ.

Эсир саламланăшăн, пире Финлянди Республикин хăй çур ĕмĕр тултарнине паллă тăвакан парламенчĕн çуртне килсе курма май панăшăн Сире татах тепĕр хут чĕререн тав тăватăп.

Совет Союзĕнчен пынă хăнасем парламент пÿлĕмĕсене пăхса çÿренĕ. Ларусем ирттермелли залра хăнасем сасăсене автоматла шута илмелли системăпа паллашнă. Çак система пĕр-пĕр сĕнÿшĕн миçе депутат сасăланине, хирĕç миçе çын сасăланине тата миçе çын нихăш майлă та сасăламаннине пĕр самантрах кăтартса парать.

Парламент буфетĕнче К. Е. Ворошилов парламент членĕсен сывлăхĕшĕн тост çĕкленĕ. Парламент членĕсем хăйсен наци тĕлĕшĕнчи тивĕçне пурнăçласа пыраççĕ кăна мар, хăйсен пĕтĕм тĕнче умĕнчи обязательствине те асра тытаççĕ: вăрçă пулмалла мар тăвассишĕн тăрăшаççĕ, мира малалла çирĕплетессишĕн кĕрешеççĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов тата унпа пĕрле пынă çынсем хисеплĕ хăнасен кĕнеки çине алă пуснă. Парламент çуртĕнчен тухас умĕн К. Е. Ворошилов хăйне парламентра ăшă кăмăлпа йышăннăшăн парламент председательне В. И. Сукселайнена тав тунă.

Совет Союзĕнчен пынă хăнасем Наци музейне питĕ интересленсе пăхса çÿренĕ. Унта Финлянди историйĕ тата культури çинчен питех те кирлĕ материалсене пухса хунă. Курса çÿренĕ чухне музей директорĕ С. А. Нурдман профессор ăнлантарса каланă.

Хулана курса çÿренĕ, çавăн пекех парламент çуртĕнче тата Наци музейĕнче пулнă вăхăтра СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошиловпа пĕрле Финлянди Республикин Президенчĕ У. К. Кекконен, премьер-министр К. А. Фагерхольм, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Р. Торнгрен, сутĕç министрĕ И. Виролайнен тата суту-илÿпе промышленность министрĕ К. Клеемола пулнă.

Кăнтăрла иртнĕ хыççăн СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов тата унпа пĕрле пынă çынсем куртăнăн суту-илÿ тăвакан кооперативăн производство предприятийĕсене, халăх пурăнакан çĕнĕ района—Тапиолăна пырса курнă. Совет Союзĕнчен пынă хăнасемпе пĕрле Финлянди Республикин Президенчĕ У. К. Кекконен, Финляндин СССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Послĕ Э. Вуори, Суту-илÿпе промышленность министрĕ К. Клеемола, Сутĕç министрĕ И. Виролайнен тата ыттисем çÿренĕ.

Кооператив предприятийĕсем хăйне майлă комбинат пулса тăраççĕ. Унта çĕвĕ фабрики, маргарин завочĕ, кофе ăвăртса хатĕрлевĕн предприяти тата ытти предприятисем ĕçлеççĕ. Унта Совет Союзĕнчен пынă хăнасене тата вĕсемпе пĕрле çÿрекен çынсене кооперативăн главнăй директорĕ У. Такки тата ертсе пыракан ытти деятельсем, çавăн пекех йышлăн пухăннă рабочисем кĕтсе илнĕ. К. Е. Ворошилова рабочисен довереннăйĕсем Р. Хиетаринепе С. Хейнонен саламланă.

Хăнасем предприятисене курса çÿреме тытăнаççĕ. К. Е. Ворошилов производствăпа паллашать, ыйтусем парать, кооператив руководителĕсемпе тата рабочисемпе калаçать.

Предприятирен тухса кайнă чухне К. Е. Ворошилов кооператив руководителĕсенчен çак предприятири рабочисене хĕрÿллĕ салам калама тата ырă сунма ыйтнă.

Тапиола хулинчи строитель-рабочисем СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне К. Е. Ворошилова тата унпа пĕрле пынă çынсене ăшă кăмăлпа чыс туса йышăннă. Совет Союзĕнчен пынă хăнасем чарăнса тăнă çурт патĕнче транспарант çакăнса тăрать. Ун çине финн тата вырăс чĕлхисемпе: «Ырă сунса кĕтетпĕр!» тесе çырса хунă. Рабочисен ячĕпе хăнасене Лепел саламланă. Туслăн йышăннăшăн, ăшă кăмăлпа саламланăшăн К. Е. Ворошилов чĕререн тав тунă.

Совет Союзĕнчен пынă хăнасем пурăнмалли çĕнĕ çуртсене пăхса çÿренĕ. Туомирла инженер хваттерĕнче пулнă.

ТУРКУ, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Финляндин авалхи столицинче—Турку хулинче пулнă. К. Е. Ворошиловпа пĕрле унта Финлянди Республикин Президенчĕ У. К. Кекконен пынă.

Хула праçникри пек илемлĕ. Мĕнпур официальнăй çуртсене тата уйрăм çынсен нумай çурчĕсене ялавсемпе илемлетнĕ. Хулан тĕп урамĕнче Финляндипе Совет Союзĕн ялавĕсем вĕлкĕшеççĕ.

Хельсинкирен Турку хулине кайнă чухне çул çинче хăнасене вырăнти халăх саламланă.

Кекконен Президентăн автомашини çине Финляндипе Совет Союзĕн ялавĕсене çакнă. Машина Турку хулинчи Собор площадĕнче чарăнать. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов машина çинчен тухсан, оркестр Совет Союзĕн гимнне калать.

Хула влаçĕсен ячĕпе СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне К. Е. Ворошилова, Финлянди Республикин Президентне У. К. Кекконена чысласа муниципалитет председателĕ Арво Тойвонен сăмах тухса каланă.

Унтан К. Е. Ворошиловпа У. К. Кекконен хăйсене кĕтсе илнĕ çынсене—Турку кĕпĕрнин губернаторне Пори Эркки Хярмяна, Турку хула совечĕн председателĕн заместительне Лаури Орела, хула совечĕн членĕсене, гарнизон командующийне Экман генерал-лейтенанта тата ыттисене алă параççĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошиловпа Финлянди Республикин Президенчĕ У. К. Кекконен патне хисеплĕ хурал начальникĕ пырать, вĕсене рапорт парать. К. Е. Ворошилов салтаксене ырă сывлăх сунать. Хăна ответлесе: «Сывă пулăр, Президент господин!» тесе кăшкăраççĕ.

Площадьре хăнасене хăлари пиншер çынсем саламланă. Турку çыннисем СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне К. Е. Ворошилова тата Финлянди Республикин Президентне У. К. Кекконена пĕтĕм çул тăршшĕпех хĕрÿллĕн саламланă.

К. Е. Ворошилов, У. К. Кекконен тата вĕсемпе пĕрле çÿрекен çынсем Хухтамяки обществин предприятийĕсене каяççĕ. Унта хăнасене общество директорĕ саламланă.

Совет Союзĕнчен пынă хăнасем «Крейтон-Вулкан» верфĕнче пулнă. Унта вĕсене верфь дирекцийĕн представителĕсемпе рабочисем ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ.

Вырăнти вăхăтпа 13 сехетре Турку муниципалитечĕ, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне К. Е. Ворошилова тата Финлянди Республикин Президентне У. К. Кекконена чысласа, ирхи апатлану ирттернĕ.

ВАЛКЕАКОСКИ, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов тата унпа пĕрле çÿрекен çынсем августăн 23-мĕшĕнче Турку хулинчен Валкеакоскине специальнăй поездпа пынă. Çула май поезд Тойяла станцийĕнче чарăнса тăнă. Унта пухăннă çынсем К. Е. Ворошилова ăшшăн кĕтсе илнĕ. К. Е. Ворошилов вĕсене саламласа сăмах каланă.

Валкеакоски станцийĕнче хăнасене хула мэрĕ К. Даль саламланă. Наци костюмĕ тăхăннă хĕрсем К. Е. Ворошиловпа У. К. Кекконена чечексем панă.

Хăнасем станцие пырса çитнĕ вăхăтра, вĕсене саламласа, фабрикăсем кăшкăртнă.

Совет Союзĕнчен пынă хăнасем Валкеакоскире «Пĕрлештернĕ хут фабрикисем» ятлă общество предприятийĕсенче пулнă.

Каçхине «Пĕрлештернĕ хут фабрикисем» обществăн директорĕ Ю. В. Вальден хăнасене чысласа апатлану ирттернĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов тата унпа пĕрле çÿрекен çынсем паян Хельсинкине поездпа таврăнаççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

СССР ÇĔР КĂМРĂК ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕН СТРОИТЕЛЬСТВО МИНИСТЕРСТВИН КУСЛАВККАРИ ÇУРТСЕМ ТĂВАКАН ЗАВОДРИ РАБОЧИСЕНЕ, ИНЖЕНЕРСЕМПЕ ТЕХНИКСЕНЕ ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Пĕтĕм Союзри Шахтерсен кунĕ ячĕпе Куславккари çуртсем тăвакан заводри çак рабочисене, инженерсемпе техниксене нумай çулсем хушши ăнăçлă ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăлас:

1. Валерий Андреевич **Андреева**—чугун çул цехĕнчи грузчика.
2. Гаврил Степанович **Бабкина**—гараж шоферне.
3. Лидия Яковлевна **Беловăна**—çуртсем тăвакан цехри станочницăна.
4. Василий Федорович **Борисова**—юсавпа механика цехĕнчи тимĕрçе.
5. Николай Васильевич **Васильева**—хăма çуракан цехри рамщика.
6. Александр Николаевич **Заикина**—производствăпа техника пайĕн начальник заместительне.
7. Егор Иванович **Иванова**—капитальнăй строительство пайĕн платникне.
8. Иван Иванович **Иванова**—типĕтекен цехăн аслă мастерне.
9. Иван Федорович **Ключкова**—столярнăй цех начальникне.
10. Мария Николаевна **Крысуновăна**—столярнăй цехри станочницăна.
11. Вера Николаевна **Кудрявцевăна**—хатĕрлев цехĕнчи станочницăна.
12. Иван Захарович **Михайлова**—çуртсем тăвакан цех сборщикне.
13. Антонина Леонтьевна **Михайловăна**—типĕтекен цехри грузчицăна.
14. Герман Григорьевич **Михеева**—çуртсем тăвакан цех мастерне.
15. Александр Васильевич **Васильева**—электромастерской мастерне.
16. Афанасий Николаевич **Морозова**—столярнăй цех мастерне.
17. Щафик Насыбуллович **Насыбуллина**—чĕртавар биржинчи сортировщика.
18. Илья Петрович **Петрова**—хăма çуракан цех мастерне.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Д. МИТЬКОВ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1956 çулхи августăн 24-мĕшĕ.

Хĕрлĕ ялавлă цехра

ÇĔМĔРЛЕ. Сĕтел-пукан комбиначĕн виççĕмĕш цех коллективĕ тухăçлă ĕçлет, плана кашни уйăхрах ирттерсе тултарать. Июль уйăхĕнчи задание вăл 114,5 процент пурнăçларĕ, планран ирттерсе 500 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ, заводри куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Цехăн машина залĕнчи станочниксем детальсене пухакан уйрăма вăхăтра парса тăраççĕ. С. Дмитриев мастер ертсе пыракан участок июль уйăхĕнче планран ирттерсе икĕ йышши изделисем пухса хатĕрлерĕ. Коммунист С. Воронковпа И. Кизинин мастерсем хăйсен участокĕсенче ĕçе тĕрĕс йĕркеленипе рабочисем тухăçлă ĕçлеççĕ.

Июль уйăхĕнчи итогсем тăрăх лайăх мастер ятне С. Воронков юлташа панă. Участок уйăхран уйăха плана 210—250 процент тултарать.

Рабочисем хушшинчи социализмла ăмăртура сĕтел-пукан участокĕнчи Н. Исайчев столяр малта пырать. Вăл хăйĕн ĕçне юратса тăвать, пахă продукци туса кăларать. Кăçалхи çур çул хушшинче вăл 19,6 уйăх нормине тултарчĕ. Исайчев юлташ ĕç тухăçлăхне ÿстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма май паракан сĕнÿсем чылай тăратнă. Унăн сĕнĕвĕсене производствăна кĕртнĕ.

Цех коллективĕ тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармасть. Август уйăхĕнче те вăл пĕр тикĕс ĕçлет, иртнĕ уйăхсенчен пысăкрах ÿсĕмсем тума тăрăшать.

В. МЫТНИКОВ.

СССР Министрĕсен Советĕнче

СССР Министрĕсен Совечĕ Маньчжури архивĕ тенĕскерне (Китайăн Хайлунцзян тата Гирин провинцийĕсенчи учреждениййĕсен 1675—1900 çулсем хушшинчи документчĕсене) Китай Халăх Республикине пама йышăннă. Çак архив Совет Союзĕн государство архивĕсенче упранă. Ăна 1901 çулта ĕлĕкхи патша Российĕн çарĕсем Цицикар хулинчен илсе тухнă пулнă.

Архивра Китайăн тулашри çыхăнăвĕсен, Хайлунцзянпа Гирин провинцийĕсен экономика тата политика тĕлĕшĕнчи аталанăвĕн историне, çавăн пекех Российăпа Китай хушшинчи çыхăнусен историне сÿтсе явакан, халичченех истори науки çакăл пĕлмен пахă материалсем пур.

Халĕ паракан материалсен хушшинче провинцисенче граждан ĕçсемпе çар ĕçĕсен управленине мĕнле йĕркелени çинчен, халăх йышĕпе социальнăй составĕ, çĕрпе усă курас йĕрке, ялхуçалăхпа суту-илÿ аталанăвĕ çинчен, çул-йĕрсем, каналсемпе дамбăсем туни çинчен, çарсем çинчен калакан документсем нумай, çавăн пекех географи карттисем тата ытти документсем пур.

Маньчжури архивĕ вăл—Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайăн XVII—XIX ĕмĕрсенчи историне тĕпчесе вĕренмелли документсен базы, çавăнпа та вăл наукăна истори тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Эстони ССР-ĕ государствăна çулталăкра сĕт памалли тата сутмалли плана тултарнă

Эстони ССР-ĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем, КПСС XX съезчĕн решенийĕсене хăвăртрах пурнăçлассишĕн социализмла ăмăртăва хутăшса, государствăна çулталăкра сĕт памалли тата сутмалли плана 102 процент тултарнă. Государствăна пĕтĕмпе 180,6 пин тонна сĕт панă тата сутнă, çакă вăл, пĕлтĕрхи çак вăхăт тĕлне хатĕрленипе танлаштарсан, 52 пин тонна нумайрах. Çулталăк вĕçленичченех республикăра государствăна татах та 50 пин тоннăран кая мар сĕт хатĕрлесе параççĕ.

Халĕ республикăри ялхуçалăх ĕçченĕсем государствăна çулталăкра аш-какай, çăмарта, çăм тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли плансене срокчен тултарассишĕн, обществăлла выльăх-чĕрлĕхе ăшă витесенче тата лайăх тăрантарса усрамалла тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

«УКРБУРУГОЛЬ» КОМБИНАТ САКАР УЙĂХРИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

Шахтерсен кунне «Укрбуруголь» комбинат горнякĕсем ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ. Августăн 23-мĕшĕнче вĕсем сакăр уйăхри плана тултарнă. Çĕр кăмрăкĕн хăйне ларакан хакне йÿнетнипе 8 миллион тенкĕ перекетленĕ. Малта пыракан «Александрияуголь» тата «Ватутинуголь» трестсем çулталăк пуçланнăранпа задани рен ирттерсе 330 пин тонна çĕр кăмрăкĕ кăларнă.

Брикетсем тăвакан фабрикăсен коллективĕсем те ăнăçлă ĕçленĕ. Вĕсем те 8 уйăхри плана срокчен пурнăçланă. Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли задание 4 процент ирттерсе тултарнă. (ТАСС).

ЯЛТИ ШКУЛСЕМ ÇУМĔНЧЕ 150 ÇĔНĔ МАСТЕРСКОЙ ПУЛАТЬ

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче Харьков облаçĕнчи ялти вăтам шкулсенче производствăна вĕренмелли классен шучĕ ÿсет. Районсенче металран тата йывăçран япаласем тума вĕрентекен 150 мастерской тума палăртнă, çав шутран 100 мастерской ытла туса пĕтернĕ, вĕсене шкулсене панă.

Политехникăлла вĕрентÿве йĕркелес ĕçре ялти шкулсене предприятисем, машина-трактор станцийĕсем, колхозниксем коллективĕсем пулăшаççĕ. Мастерскойсем валли верстаксем тата инструментсем тăваççĕ, токарнăй тата сверлильнăй станоксем параççĕ. Облаçри машина-трактор станцийĕсемпе совхозсем шкулсене тĕрлĕ машинăсем, çав шутра тракторсем, комбайнсем, груз турттармалли автомобильсем 150 ытла, электромоторсемпе автомобиль двигателĕсем, ялхуçалăх машинисене хатĕрсем чылай панă. (ТАСС).

Çĕнĕ хула

РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ кăçалхи августăн 7-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх, Куйбышев облаçĕнчи Октябрьск поселока хуласен шутне кĕртнĕ. Çĕнĕ хула Атăлăн сылтăм çыранĕнче, Сызрань патĕнче. Кунта ĕлĕк Батраки поселок пулнă. Халĕ Октябрьск—вунпилĕк пин çын пурăнакан хула. Унта асфальт тăвакан пысăк заводсем пур, йывăçран япаласем тата çурт-йĕр тăвакан предприятисене пысăклатаççĕ. Пысăк кирпĕч завочĕ çĕнĕ стройкăсем валли строительство материалĕ туса кăларать.

Октябрьск хулинче çĕнĕ çуртсем нумай лартаççĕ, вăл татах та пысăкланать. (ТАСС).

Август уйăхĕнче государствăна тырă парса татасси—кашни колхозăн тивĕçĕ

ХИСЕП ХĂМИ

КПСС райкомĕсемпе райисполкомсем тăратнă тăрăх, тĕштырă культурисем пухса кĕртнĕ, государствăна тырă памалли плана тултарнă тата хăйсем валли кĕрхи тырă вăрлăхĕ хывса çитарнă çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ

КАНАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

32. **«Красная Армия» колхоз** (колхоз председателĕ **А. Ф. Высоцкий** юлташ, парторганизаци секретарĕ **З. А. Андреев** юлташ).
33. **«Комсомол» колхоз** (колхоз председателĕ **И. Я. Яковлев** юлташ, парторганизаци секретарĕ **И. М. Михайлов** юлташ).
34. **«Коммунар» колхоз** (колхоз председателĕ **Г. П. Петров** юлташ, парторганизаци секретарĕ **М. М. Цыганов** юлташ).
35. **Доронин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **И. К. Кузьмин** юлташ, парторганизаци секретарĕ **С. Ф. Филиппов** юлташ).

ЕЛЧĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

36. **Чапаев ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **В. Ф. Салмин** юлташ, парторганизаци секретарĕ **И. П. Иголкин** юлташ).

ЭЛЕК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

37. **«Правда» колхоз** (колхоз председателĕ **С. А. Шлябин** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Ф. С. Семенов** юлташ).
38. **«Самолет» колхоз** (колхоз председателĕ **А. Ф. Филиппов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **А. И. Илларионов** юлташ).
39. **«Сталинград» колхоз** (колхоз председателĕ **М. П. Прокопьев** юлташ, парторганизаци секретарĕ **П. С. Степанов** юлташ).

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

40. **Андреев ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **П. А. Краснов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **В. И. Чашин** юлташ).

КУСЛАВККА РАЙОНĔ ТĂРĂХ

41. **«Ударник» колхоз** (колхоз председателĕ **В. Н. Ключников** юлташ, парторганизаци секретарĕ **П. Ф. Добрянский** юлташ).

УЛАТĂР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

42. **«Победа» колхоз** (колхоз председателĕ **М. С. Митин** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. И. Тюрин** юлташ).
43. **Калинин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **С. М. Негрозов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. И. Коноплева** юлташ).
44. **«Стахановец» колхоз** (колхоз председателĕ **И. А. Белов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Ф. Г. Белоусов** юлташ).
45. **Хрущев ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Н. Г. Плахов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **И. С. Фомин** юлташ).
46. **«Путь Ильича» колхоз** (колхоз председателĕ **А. А. Яблонский** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Я. И. Майоров** юлташ).

ÇĔМĔРЛЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

47. **«Вперед» колхоз** (колхоз председателĕ **Л. П. Павлов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **А. Х. Харитонов** юлташ).
48. **«Комбинат» колхоз** (колхоз председателĕ **И. Г. Моисеев** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. Г. Иванов** юлташ).
49. **Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕн заместителĕ **П. К. Спиридонов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **А. С. Семенов** юлташ).
50. **Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Я. П. Федоров** юлташ, парторганизаци секретарĕ **А. Г. Мигишов** юлташ).
51. **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **М. Ф. Чурбанов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **И. М. Логинов** юлташ).
52. **«День победы» колхоз** (колхоз председателĕ **В. М. Миронов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Д. Т. Самсонов** юлташ).

ЧУРАЧĂК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

53. **«Молодая сила» колхоз** (председателĕ **И. С. Степанов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **П. П. Павлов** юлташ).

ЕТĔРНЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

54. **«Большевик» колхоз** (председателĕ **Н. Д. Цветнов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **В. Я. Федоров** юлташ).

КУВАКИНО РАЙОНĔ ТĂРĂХ

55. **Сталин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **А. С. Голованов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. И. Пчелянов** юлташ).
56. **«Новь» колхоз** (председателĕ **Д. С. Келин** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. И. Рогов** юлташ).

Муркаш тата Шупашкар районĕсем государствăна тырă памалли плана тултарнă

Муркаш районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем, улттăмĕш пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕн планне йăнăçлă тултарассишĕн кĕрешсе, государствăна тырă памалли плана, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 17 кун маларах—августăн 22-мĕшĕнче 102 процент тултарчĕç.

Государствăна тырă парас ĕç малалла пырать.

КПСС райкомĕн секретарĕ **Е. МИДАКОВ.**
Райсовет исполкомĕн председателĕ **П. ПЕТРОВ.**
МТС директорĕ **В. ИЖУТОВ.**

* * *

Ставрополь тăрăхĕнчи колхозниксемпе механизаторсем чĕннипе государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçласишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Шупашкар районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем государствăна тырă памалли плана срокчен августăн 24-мĕшĕнче 100 процент тултарчĕç. Вăрлăхлăх кивçен илнĕ тырра та пĕтĕмпех тавăрса пачĕ.

МТС ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕпе тырă парасси малалла пырать.

КПСС райкомĕн секретарĕ **А. ВОРОНОВ.**
Райсовет исполкомĕн председателĕ **А. СЕМЕНОВ.**
МТС директорĕ **В. АФАНАСЬЕВ.**

Çĕрулми йышăнма хатĕр мар

ЧУРАЧĂК. Районти хăшпĕр колхозсем çĕрулми кăларма тытăннă. Çак кунсенче Шуркасси ял Советĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз ĕçченĕсем государствăна 150 центнер çĕрулми леçсе пачĕç.

Анчах та районти хатĕрлев пункчĕсем колхозсенчен уйрăм çынсенчен çĕрулми тата пахча çимĕç йышăнма хатĕрленсе çитмен. Красноармейски районĕнчи «Большевик» заводăн, Чурачăкри крахмал тăвакан цехăн кăçал 21 колхозран çĕрулми йышăнмалла. Цех çак ответлă ĕçе тума хатĕр мар. Ăна 1955 çултах ĕçе янă, апла пулин те строительствăна халĕ те вĕçлемен. Çĕрулми виççе йышăнма тараса вырнаçтарса лартман. Пушă лавсемпе çаврăнса тухма кĕпер çук. Буртăсем хатĕр мар.

Крахмал тăвакан агрегата капитальнăй ремонт тума халĕ çеç тытăннă, хăçан юсаса пĕтерессси паллă мар. Иртнĕ çул агрегата трактор вăйĕпе ĕçлеттернĕ, халĕ тракторне те юсама салатса пăрахнă. Цех шоссе çулĕнчен пĕр километрта çеç вырнаçнă пулин те, ун патне пымалли çул туман.

Çак çитменлĕхсене «Большевик» завод директорĕ Макаров юлташ лайăх пĕлет, анчах ĕçе лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть.

Чурачăк райповĕн хатĕрлев кантурĕ те çĕрулми, пахча çимĕç йышăнма кирлĕ пек хатĕрленсе çитмен. Кăçал кунта 2.540 тонна çĕрулми, 175 тонна пахча çимĕç хатĕрлемелле. Анчах вĕсене усрама пĕр хранилище те çук. Кăçал та пахча çимĕçе иртнĕ çулсенчи пекех, уйрăм çынсем патĕнче усрасси çине шанассĕ.

Хатĕрлев кантурĕ ĕççыннисене çулталлăкĕпех пахча çимĕç сутассине йĕркелеме шутламасть. Районти чайнăй валли хатĕрлекен пахча çимĕçе те ĕççыннисене сутма хатĕрленĕ тесе шутлассĕ. Ку вăл пачах та тĕрĕс мар.

Халĕ çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлемелли хĕрӳ вăхăт пуçланать. Чурачăк районĕнчи хатĕрлев организацийĕсен ĕççыннисем валли çĕрулмипе пахча çимĕç ытларах хатĕрлессишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

М. ЕМЕЛЬЯНОВ.

Муркаш районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз районта чи малтан государствăна тырă парса татрĕ. Çак кунсенче колхозникĕсене аванс шучĕпе ĕçкунĕ пуçне 1,5-шер килограмм тĕштырă, 2-шер тенкĕ укçа валеçсе пачĕ.
Ӳкерчĕк çинче: Чапаев ячĕпе тăракан колхозра государствăна закуп шучĕпе сутма тырă тиеççĕ.

Г. Зиньков фотоӳкерчĕкĕ.

Пирĕн завод плана мĕншĕн тултармасть?

(Рабочисен çырăвĕ)

Пирĕн завод коллективĕ иртнĕ çулхи производство планне 102,5 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 103 процент тултарчĕ, продукцин хăйне лараман хакне чылай йӳнетрĕ.

Кăçал вара ĕçсем япăхланчĕç: завод çур çулхи плана тултараймарĕ. Иккĕмĕш уйăхĕнче хăшпĕр улшăну пулчĕ. Анчах ăна та çителĕклĕ теме çук. Тивĕçлĕ условисем туса парсан, эпир плана тултарма çеç мар, чылай ирттерсе тултарма та пултаратпăр. Нумай рабочисем ĕç норминe тăтăшах ирттерсе тултарассĕ. Акă Е. Бухтулов электросварщик, В. Шумилова М. Никитина тата А. Константиновăпа Е. Степанова формовщицăсем, С. Егорова И. Васильев тимĕрçĕсем тата слесарьсен бригадисем материал йĕркеллĕ парса тăнă чухне нормăна 150 процент е ытларах та тултарассĕ, лайăх продукци çеç туса кăларассĕ. Рабочисен хастарлăхĕ пысăк пулни çак цифрăсенчен уççăн курăнать: пĕрремĕш çур çулта заводра ĕç тухăçлăхĕ планпа пăхнинчен вунă процента ытла ӳснĕ, продукцин хăйне лараман хакĕ 8,9 процент вырăнне 24 процента яхăн чакрĕ. Ăна пула 409.600 тенкĕ тупăш илнĕ.

Пирĕн ĕçри тĕп чăрмав вăл — материалсемпе чĕртавар çителĕклĕ парса тăманни. Кунпа, пирĕн шутпа, пуринчен ытла Чăваш АССР Вырăнти промышленность министерстви айăплă. Вăл продукци туса кăларма панă задание пурнăçлама материалсемпе чĕртавар кирлĕ чухлĕ уйăрса памасть. Кăçал заводăн 8 пин кубометр кĕрекен цистернăсем туса кăлармалла. Министерство 6 пин кубометр тумаллăх çеç тимĕр уйăрса пама палăртнă. 1-мĕш кварталта министерство 26 тонна ытла чугун парса çитерейменĕ. Çавна пула чугунтан продукци туса кăлармалли плана завод 79,5 процент çеç тултарчĕ. Иккĕмĕш кварталта чугун нимĕн чухлĕ паман тесен те тĕрĕс пулать. Алюмини кирлĕ чухлĕ уйăрса паманни те чăрмав кӳрет. Министерство кăçал завода кирлинчен 50 тонна сахалтарах пама палăртнă.

Чугуна якатма çаврака чулсем кирлĕ. Вĕсемсĕр формăран кăларнă япаласене, уйрăмах кăмака таврашĕсене якатма май çук. Çак чулсене министерство йĕркеллĕ парса тăман пирки пĕр уйăха яхăн ĕç чарăнса тăчĕ. Ятарласа Хусана кайса илсен çеç ĕç малалла кайрĕ.

Министерство строительство материалĕсем те кирлĕ чухлĕ памасть. Кăçал заводра кашни сехетре виçĕ тонна чугун шăратмалли вагранка лартмалла (хальхи вагранкăпа çур тонна çеç шăратнă). Анчах огнеупорнăй кирпĕч çук пирки ĕç чарăнса тăрать.

Кăçал электросварочнăй цех тумалла. Ун валли укçа-тенкĕ пур, 80 пин кирпĕч кӳрсе килнĕ. Цементпа известь çукки çеç чăрмантарать. Министерствĕ çак уйăхра Сĕрпӳри промкомбинатран 20 тонна известь илмелле тесе пĕлтерчĕ, анчах Сĕрпӳре известь çук.

Пĕр пытармасăрах çапла калас пулать: завод дирекцийĕпе профсоюз организацийĕ кирлĕ пек ĕçлемессĕ. Заводра вырăнти резервсемпе çителĕксĕр усă курассĕ, çĕнĕ йышши продукци туса кăларас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Ку енĕпе хăшпĕр чухне ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе сĕнĕвĕсене шута илмеççĕ.

Профсоюз организацийĕ (завком председателĕ К. Вотяков юлташ) социализмла ăмăртăва çителĕксĕр ертсе пырать. Хăшпĕр рабочисене ăмăртăва явăçтарман, ăмăртаканисем обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăмассĕ. Заводра хисеп хăми те, кĕтарту хăми те пур. Анчах вĕсем çине йĕркеллĕ çырса пымассĕ.

Политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатмалла. Лекцисемпе докладсем тăтăшрах туса парсан лайăх пулĕччĕ. Тепĕр чухне пушă вăхăтра вулама хаçат-журнал тупма çук. Художествăллă пултарулăх коллективĕн ĕçне вăйлатмалла. Стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăмасть.

Партин XX съезчĕ промышленность умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çак задачăсене эпир ăнланатпăр, вĕсене чыслăн пурнăçлама тăрăшатпăр.

Эпир çак çырупа Чăваш АССР Вырăнти промышленность министрĕнчен Н. Бобров юлташран пулăшу ыйтатпăр.

Канашри литейно-сварочнăй заводри рабочисем: **В. МИХАЙЛОВ. В. ПРОКОПЬЕВ. И. КОНСТАНТИНОВ.**

Усов мĕн хăтланать

СОВЕТСКИ. «Сталинград» колхоз членĕсем çак кунсенче никçанхинчен те ытларах тăрăшса ĕçлессĕ. Иртен пуçласа сĕм тĕттĕмччен колхоз хирĕсенче хĕрӳ ĕç пырать. А. Никитин тата Н. Михайлов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем колхозра чи малтан пĕтĕм тырпула вырса пĕтерчĕç, халĕ авăн çапассĕ.

Анчах тырпула пухса кĕртес ĕçре çитменлĕхсем те нумай-ха. Колхоза МТС начар пулăшать, договортан тухса тăракан обязательствăсене пурнăçламасть. Договор тăрăх МТС-ăн колхоза 246 гектар тĕштырă вырса памалла, паянхи куна 100 гектар çеç вырнă. М. Усов ертсе пыракан трактор бригади калама çук япăх ĕçлет, пысăк тăкаксем тăвать. Çавăнпа та колхоз çак бригадăна комбайнпа малалла выртарма килĕшмен.

Колхоза МТС-ран силосорезка илсе пынă. Анчах унпа колхозниксем усă курса илайман. М. Усов бригадир ăна çиййĕнчех юнашарти «Звезда» колхоза илсе кайма хушнă.

М. Усов мĕншĕн çапла хăтланнă-ха? Вăл председателе ăна хăйне валли вутă турттарса килме автомашина паманшăн тавăрма шутланă. Калас пулать, М. Усов çакăн пек киревсĕр ĕçсем час-часах тăвать. Сăмахран, тырă вырнă вăхăтра вăл МТС тракторĕпе вăрмантан хăйне валли вутă турттарнă.

Колхозра халĕ пĕр трактор кăна ĕçлет. Вăл пĕтĕм ĕçе туса çитерейместь. МТС-ăн 242 гектар çинчи тырра çапмалла, халĕ 58 гектар кăна çапнă. 28 гектар çинчи кукурузăна та силос хывма пуçтарса паман. 236 гектар вырăнне 110 гектар кăна кĕрхи тырăсем акнă, кĕрхи сĕртме тума пуçăнман.

Советски МТС дирекцийĕн М. Усов юлташ ертсе пыракан трактор бригадин ĕçĕпе тĕплĕнрех интересленмелле.

И. СТЕПАНОВ.

Самообложени укçипе тĕрĕс усă курмалла

Сĕнтĕр районĕнчи Ильинка ял Советĕнче самообложени укçи пухас ĕç япăх пырать. Августăн 1-мĕшĕ тĕлне 530 хуçалăхран 316 хуçалăх самообложени укçине пĕр пус та тӳлемен. Пухса çитермен укçа 9.734 тенкĕ шутланать.

Кăçалхи çичĕ уйăхра самообложени укçипе тума палăртнă ĕçсенчен пĕрне те туман. Ильинкăри чайнăйпа ялпо правленийĕ хушшинчи кĕпере тума пĕлтĕрех тытăннă, анчах паянхи куна çитсе те туса çитермен. Çав вăхăтрах самообложени укçине ял Совет руководителĕсем урăх ĕçсем тума расходлама тытăннă. Кĕперсене юсас, çăлсене тӳрлетес, шкул çурчĕсене юсас, ялсене илемлетес ĕçре усă курас вырăнне самообложени укçине Хитарти вулав çурчĕ валли вутă турттарнăшăн, çак çуртри инвентарьсене юсанăшăн тата ытти вак-тĕвек ĕçсемшĕн, ял Совет çурчĕн тăррине тӳрлетнĕшĕн тӳлеме расходланă. Çак асăннă ĕçсене тума бюджет укçипе усă курмалла пулнă. Çапла вара ял Совечĕ самообложени укçине 740 тенкĕ тĕрĕс мар расходланă, çав вăхăтрах ялапа палăртнă мероприятисене пурнăçлама пĕр пус та тăкакламан.

Ял Совечĕн бюджет комиссийĕ самообложени укçипе тĕрĕс усă курманнипе килĕшет.

В. ЛУКЬЯНОВ.

«КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ» ХАÇАТРА ÇЫРНĂ ХЫÇÇĂН

«МЕХАНИЗАТОРСЕМ ÇИНЧЕН МАНМАЛЛА МАР»

КПСС Куславкка райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Коммунизм ялавĕ» хаçатра июнĕн 30-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Механизаторсем çинчен манмалла мар» ятлă статьяна машина-трактор станцийĕнчи партбюро ларăвĕнче сӳтсе явнă, механизаторсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас енĕпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă.

«ÇАМРĂК МЕХАНИЗАТОРСЕМШĔН ТĂРĂШМАЛЛА»

Июлĕн 21-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Çамрăк механизаторсемшĕн тăрăшмалла» ятлă çыру пичетленнĕччĕ.

КПСС Етĕрне райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, ялхуçалăх механизаторĕсем хатĕрлекен училищĕре вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатасси çинчен парторганизаци пухăвĕнче сӳтсе явнă, пуху училище директорне Симонов юлташа тата парторганизаци секретарьне Чистяков юлташа хаçатра асăннă çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерме, вĕренекенсем валли час-часах лекцисемпе докладсем ирттерме хушса хăварнă. Парти райкомĕ райпотребсоюз руководителĕсене училищĕре столовăй валли ялан паха продуктсем парса тăма кирли çинчен астутарнă.

«СУТУ-ИЛӲ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕМ НАЧАР ĔÇЛЕÇÇĔ»

Сĕнтĕр райпотребсоюзĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн 117-мĕш номерĕнче пичетленнĕ «Суту-илӳ организацийĕсем начар ĕçлеççĕ» статьяри фактсем тĕрĕс пулнă.

Статьяна Ярославкăри ялпо правленийĕн ларăвĕнче сӳтсе явнă, ялпо председательне Яндимиров юлташа ĕççыннисене кулленхи кирлĕ таварсем вăхăтра кӳрсе килме хушнă, чайнăй буфетчицине Максимовăна администраци енĕпе ответ тыттарнă.

Паян Кольцовкăра

Вăйлă тырпул çитĕнтерчĕç кăçал Кольцовка çыннисем. Ялтан тухсанах сирĕн умна тĕлĕнмелле илемлĕх курăнса каять.

Кольцовкăпа Зеленовка ялĕсем хыçĕнче вăрман пек кукуруза шавласа, хумханса ларать. Кукуруза тунисем кунта виçĕ метртан та иртеççĕ, кашни туна çинче иккĕшер-виççĕшер пысăк пуççем. Ялăн тепĕр енне тухатăн—каллех хирсем.

Халĕ çак анлă уйсенче пур çĕрте те пурнăç шавласа, вĕресе тăрать. Иртен пуçласа каçченех машина моторĕсен шавĕ илтĕнет. Ĕнер çеç ыраш, тулă кашласа, хумханса, ларнă çĕрте халĕ вара пысăк капансем, çĕмелсем, суратсем ăкăранах курăнассĕ.

Кольцовка çыннисем мĕнпур тĕштырăсене районта чи малтан вырса пĕтерчĕç. Анчах колхозра хĕрӳ ĕç пĕр самантлăха та чарăнмасть. Колхозниксем халĕ кĕлте турттарассĕ, авăн çапассĕ, кĕрхи тырăсем акассĕ. Вăрнар станцине каякан çул çинче тырă тиенĕ автомашинăсем хăвăртăн ирте-ирте каяççĕ. Орденлă колхоз государствăна тап-таса тырă парать.

Халĕ колхозри чи шавлă вырăн—выльăх-чĕрлĕх фермисем патĕнче. Кунта вĕтетнĕ кукуруза туни тиенĕ автомашинăсем, лавсем вĕçĕ-хĕррисĕр килсе тăрассĕ. Колхозри выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем кукурузăран силос хываççĕ.

Ĕç вĕрет, ĕç лайăх пырать. Вăйлă тырпулшăн Кольцовкăра пысăк ĕçленӳпе тата хавасланса колхозник та, тракторист та, уй-хир бригадирĕ те, колхоз председателĕ те кĕрешнĕ. Чăваш республикинчи колхозсенче вăйлă тырпул çитĕнтерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерессишĕн Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва пуçарнă колхоз çыннисем кашни пучаха пăхса ӳстернĕ, вăл тутă та йывăр пултăр тесе тăрăшнă.

— Сакăрвунă çулта ĕнтĕ эпĕ,—тет капан тăвакан колхозник Ефим Васильевич Ерошин.—Анчах та кăçалхи пек вăйлă тырпул курман. Пăхăр-ха ыраш пуççи çине: кашни гектар çинче çирĕмшер-çирĕм пиллĕкшер çĕмел ларать. Гектартан—икçĕр-икçĕр аллăшар пăт тырă. Акă мĕн пек пысăк пулнилăх.

Тырă! Ун çинчен халĕ итемсем çинче, колхоз амбарĕсем патĕнче хĕрӳллĕ калаçусем пыраççĕ. Хирте, кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче, колхозри агитаторсем колхозниксене партин XX съезчĕн решенийĕсем çинчен, улттăмĕш пилĕкçуллăхăн аслă программи çинчен каласа параççĕ.

Акă, кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче, итем çинчи пысăк капансем патĕнче агитатор-коммунистка Валентина Михайловна Саканина тавра пĕрремĕш бригадăри колхозниксемпе колхозницăсем пухăнса ларчĕç. Саканина—колхозри паллă çын, унăн кăкăрне Социализмлă Ĕç Геройĕн Ылтăн çăлтăрĕ тата Ленин орденĕсем илемлетеççĕ.

— Пурте эпир, колхозниксемпе совхоз рабочийĕсем, — тет Валентина Саканина,—партин XX съезчĕн решенийĕсемпе хавхаланса уй-хирсенче тăрăшса ĕçлетпĕр. Эпир государствăна колхозсен кĕлечĕсенче тырă питĕ нумай пултăр тесе ĕçлетпĕр. Эпир Тăван çĕршыв валли ытларах та ытларах аш-какай, сĕт-çу, çăм, çăмарта туса парассишĕн кĕрешетпĕр.

Пирĕн колхозсенче халĕ пурнăç çултан çул лайăхланса пырать. Пăхăр-ха пирĕн уй-хирсене: кунта тракторсем, комбайнсем, молотилкăсем ĕçлеççĕ. Кăçал колхоз электростанцие ĕçе янă: выльăх-чĕрлĕх фермисенче автопоилкăсем, çакса тунă çулсем вырнаçтарса тухнă. Çак пуян техника пирĕн ĕçе çăмăллатать, пирĕн пурнăçа лайăхлатать. Юлташсем, татах та ывăнма пĕлмесĕр ĕçлер, тырпула хăвăртрах çапса пĕтерер, кукурузăна вăхăтра пухса кĕртер, выльăх апачĕ ытларах хатĕрлер.

— Пĕтĕм ĕçе, Валя, вăхăтра туса пĕтерĕпĕр. Тăван çĕршыв умĕнче парăмра юлмăпăр,—пĕр харăссăн ответлерĕç бригадăри нумай колхозницăсем.

Июлĕн 20-мĕшĕнче колхозра тырпул пуçтарса кĕртес ĕç пуçланнă. Пирвайхи кунах хире пурте тухнă. Ыраш ытла та вăйлă пулнă, çавăнпа та ăна вырăнĕ-вырăнĕпе алăпа тата жнейкăсемпе çеç вырма май пулнă. Çанталăк начар тăнă: кашни кунах хура пĕлĕтсем тапрана çăвăрса илнĕ, çумăр çуса тăнă. Кун пек çанталăкра тырăсене вырма çăмăл пулман, анчах та вырмалла пулнă, вăхăт кĕтмен. Ĕç лайăхрах кайтăр тесе, кашни колхозникпа колхозницăна уйрăм участоксем уйăрса панă. Çумăр кунĕпех ĕçлеме памасан та, колхоз ĕçченĕсем кашни сехетпе усă курса ĕç нормине тултармасăр киле таврăнман.

Ĕçре малта пыракансем, пурне те хавхалантарса пыракансем—коммунистсем пулнă. Социализмлă Ĕç Геройĕсем Валентина Саканина, Татьяна Кидырова чи малта пынă. Вĕсем хыççăнах, пĕр утăм кая юлмасăр ытти колхозницăсем ĕçленĕ. Кашни кунах пĕтĕм колхоз кам мĕн чухлĕ вырнине, мĕнле ĕçленине пĕлсе тăнă.

450 гектар çинчи ыраша кĕске срокра пуçтарса кĕртнĕ. Çав вăхăтрах 100 гектар çинче ир пулакан «Торедаг» пăрçана та çулса пуçтарнă. Çакă вăл тырпулшăн пыракан аслă кĕрешӳре пирвайхи çитĕнӳ пулнă.

Сӳтри вырма тухас умĕн колхоз правленийĕ бригадирсем, коммунистсем пухăннă. Колхоз председателĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ Сергей Ксенофонтович Коротков юлташ колхоз агрономне, тăваттăмĕш уй-хир бригадин бригадирне Иван Нагаткина вăйс пек пулса çитнĕ сурхи тулла жнейкăпа çулма, кайран ăна подборщиклă «С-4» комбайнпа пухса çапма сĕннĕ. Çамрăк бригадир, хастар комсомолец çак ĕçе хĕрӳллĕн тытăннă, çийĕнчех тулă пуссине жнейка илсе тухнă. Вырнă тырра пĕчĕк ярăмсем туса уйрăм колхозниксене кăларнă.

— Жнейка виçĕ хутчен пăрахнă купана пухса илсе пĕр ярăм тăвăр,—вĕрентнĕ колхозниксемпе колхозницăсене Иван Нагаткин,—жнейка хыççăн пĕр ретне икĕн ĕçлесе, жнейка пăрахса пынă виçĕ купана, виççĕмĕшпе пĕрремĕш купине илсе, варринчи иккĕмĕш купи çине хурса пырăр.

Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсене кăтартса панă пек ĕçленĕ, вырса пăрахнă тырра, вăл тииннĕ хыççăн, подборщиклă комбайнпа пухса çапма май туса панă.

Çакăн хыççăн ытти бригадăсем те тăваттăмĕш бригада примерĕпе ĕçлеме пуçланă. Хире мĕнпур жнейкăсене илсе тухнă. Жнейкăпа вырса пăрахнă хыççăн тепĕр 3—4 кунтан вара подборщиклă комбайнсем ĕçе кайнă. Вĕсем пĕчĕк ярăмсене аванах пухса пынă, тырра лайăх çапса тĕшĕленĕ. Çапнă тырра вăхăтлăха тунă итемсем çинче тасатнă та, государствăна леçсе панă е колхоз склачĕсене хунă.

Çак çĕнĕ меслет кольцовкăсене суртыррисене хăвăрт та, пĕр тăкакламасăр пуçтарса кĕртме май панă. Кунта çĕнĕ майпа тулла çеç мар, сĕлĕе те, хуратула та пуçтарса, çапса кĕртнĕ.

Евгений ЕНИ.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнма

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ августăн 8-мĕшĕнче йышăннă тăрăх, пирĕн республикăри çак колхозсемпе малта пыраканисене 1956 çулхи выставка участникĕсем пулма çирĕплетнĕ:

ВĂРНАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Хрущев ячĕпе тăракан колхоз.
2. И. П. Петров—Хрущев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.
3. И. И. Васнин—Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадирĕ.
4. А. Д. Ашанин—Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадирĕ.
5. П. Д. Пунин — Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадирĕ.
6. Т. П. Першуткина — Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри доярка.
7. А. Н. Оленина—Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри доярка.
8. Е. П. Трошкина—Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри свинарка.
9. Н. А. Ванюхина—Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри свинарка.
10. Киров ячĕпе тăракан колхоз.
11. Н. Ф. Филиппов—колхоз председателĕ.
12. Р. А. Григорьева—колхоз агрономĕ.
13. А. И. Иванов—уй-хир бригадирĕ.
14. Жданов ячĕпе тăракан колхоз.
15. А. С. Семенов—колхоз председателĕ.
16. В. А. Кудрявцев — колхозри ветфельдшер.
17. И. М. Смирнов—Вăрнар МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирĕн помощникĕ.
18. Я. С. Гусихин — Вăрнар МТС-ĕнчи тракторист.
19. А. Д. Милицков—Вăрнар МТС-ĕнчи тракторист.
20. П. С. Киселев—Вăрнар МТС-ĕн трактористĕ.
21. И. Н. Доманин — Вăрнар МТС-ĕн трактористĕ.
22. В. В. Ефремов — Вăрнар МТС-ĕн трактористĕ.
23. Ф. П. Якимов — Вăрнар МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирĕ.

ЙĔПРЕÇ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Киров ячĕпе тăракан колхоз.
2. С. И. Иванов—колхоз председателĕ.
3. А. И. Этричев—колхоз председателĕн заместителĕ.
4. М. Ф. Феофанов—колхоз бухгалтерĕ.

КРАСНОАРМЕЙСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Коминтерн ячĕпе тăракан колхоз.
2. Г. Е. Емельянов—колхоз зоотехникĕ.
3. Н. Г. Гаврилов—уй-хир бригадирĕ.

ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз.
2. Н. С. Хабаров—колхоз председателĕ.
3. Д. А. Андреев—колхоз агрономĕ.
4. П. А. Павлов—колхоз зоотехникĕ.
5. Н. И. Попова—теплицăри звеньевая.
6. В. М. Попов—колхозник.
7. С. Ф. Федоров—колхозник.
8. А. А. Ильина—телятница.
9. Фрунзе ячĕпе тăракан колхоз.

ЕЛЧĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри чăх-чĕп ферми.

2. Ф. М. Овчинникова—Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри ветфельдшер.
3. А. П. Григорьев—«Автогигант» колхозри уй-хир бригадирĕ.
4. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз.
5. Н. Ф. Федоров—колхоз председателĕ.
6. Н. Т. Чермаков—колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ.
7. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз.
8. А. А. Муратов—колхоз председателĕ.
9. М. Г. Захаров—колхоз зоотехникĕ.

МУРКАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. А. Д. Иванова—Сталин ячĕпе тăракан колхозри овцевод.
2. А. И. Макарова—Сталин ячĕпе тăракан колхозри овцевод.
3. А. А. Арсентьева—Сталин ячĕпе тăракан колхозри овцевод.
4. И. А. Андреева—Сталин ячĕпе тăракан колхозри овцевод.
5. А. Д. Димитриева—Сталин ячĕпе тăракан колхозри птичница.

ВАРМАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. В. М. Миронов—«Свобода» колхозри уй-хир бригадирĕ.
2. С. С. Ильин—«Маяк» колхозри уй-хир бригадирĕ.
3. Г. П. Андреев—«Слава» колхозри хăмла ĕрчетекен бригадир.
4. Ф. Е. Алендеев—Мичурин ячĕпе тăракан колхозри звеньевой.
5. Т. И. Ильина—«Дружба» колхозри доярка.

КУВАКИНО РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Государствăн 181-мĕш вăрлăх участокĕ.
2. К. Г. Кирилина—участок агрономĕ.
3. И. Г. Корабенков—участокри бригадир.

ЭЛĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Ленин ячĕпе тăракан колхоз.
2. М. С. Сергеев—колхоз председателĕ.
3. Ф. А. Васильева—колхоз агрономĕ.

КОМСОМОЛЬСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Молотов ячĕпе тăракан колхоз.
2. З. И. Евдокимова—колхоз агрономĕ.
3. К. А. Зайцев — «Дружба» колхозри уй-хир бригадирĕ.
4. В. И. Беликов — «Красная звезда» колхозри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç заведующийĕ.

УЛĂТĂР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Улăтăр районĕ.
2. «Победа Октября» колхоз.
3. П. М. Душонков—колхоз председателĕ.

ПАРАЧКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз.
2. М. И. Хăйлов—колхоз председателĕ.
3. К. И. Солнцева—колхоз агрономĕ.

1. М. И. Тимофеев—Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн вĕренӳ хуçалăхĕн заведующийĕ.
2. А. Н. Никандрова—вĕренӳ хуçалăхĕнчи доярка.

Малта пыракан дояркăсем

1955 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1956 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне сĕт суса илнĕ

Дояркăсен ячĕсем	Колхозсем е совхозсем	Район	Кашни ĕнерен сĕт суса илнĕ (килогрампа)
101. М. Г. Баринова	Маленков ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2059
102. Е. И. Черкасова	«Путь Ильича» колхоз	Улатăр	2054
103. Н. А. Митушова	«Комбинат» колхоз	Çĕмĕрле	2049
104. А. Н. Шайдукова	Маленков ячĕпе тăракан колхоз	Первомайски	2048
105. З. И. Умпикова	«Победа Октября» колхоз	Улатăр	2046
106. Е. И. Ильина	Маленков ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2044
107. Г. Степанова	«Новая жизнь» колхоз	Çĕрпӳ	2039
108. О. Т. Тимофеева	К. Маркс ячĕпе тăракан колхоз	Элĕк	2033
109. Г. Н. Слесарева	«Красный Октябрь» колхоз	Муркаш	2033
110. А. Ф. Федорова	Маленков ячĕпе тăракан колхоз	Етĕрне	2031
111. Т. Силантьева	«Новая жизнь» колхоз	Çĕрпӳ	2029
112. П. П. Потапова	«Первомайский» колхоз	Улатăр	2029
113. А. И. Рожкова	«Путь Ильича» колхоз	Улатăр	2028
114. Т. И. Новикова	«Путь Ильича» колхоз	Улатăр	2023
115. М. Г. Назарова	«Стахановец» колхоз	Улатăр	2015
116. Н. Кириллова	«Новая жизнь» колхоз	Çĕрпӳ	2002
117. П. В. Оборина	Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Çĕмĕрле	2001

Шупашкарти тарасасем юсакан заводра тĕрлĕрен тарасасемпе электроприборсем юсакан çĕнĕ цех ĕçлеме пуçларĕ. Унтах магазинсем валли тарасасем туса кăларассĕ.

Ӳкерчĕк çинче: заводăн механически цехĕ.

А. Припалов фотоӳкерчĕкĕ.

Ара çырми хĕрринчи завод

Вăрнар станцинчен Мăнçырма енелле кайнă чухне Ара çырми хĕрринче трубаран тĕтĕм мăкăрланса ларнине куратăн. Ку—«Универсал» артелĕн çĕнĕ кирпĕч завочĕ. Кунта строительство ĕçĕсем пĕтмен-ха. И. Никифоров юлташ ертсе пыракан бригада кирпĕч хĕртмелли кăмакана туса çитерет. Çĕнĕ кăмакара уйăхра 150 пин кирпĕч хĕртсе кăлармалла. Кирпĕч тăвакан иккĕмĕш агрегат, 125 лаша вăйлă двигатель вырнаçтарса лартаççĕ. Çакăн хыççăн артель çулталăкра 3 миллиона яхăн кирпĕч туса кăларма пултарать.

Артель правленийĕ (председателĕ Г. Елисеев юлташ) завода тума тытăнсан материалсем аякран кӳрсе килессе кĕтсе лармарĕ, вырăнта тупма е тума тăрăшрĕ. Пулас завод площадкинче чи малтан кирпĕч производствин организацилерĕ. Ун валли пысăках мар агрегат лартнă, вичĕ сарай тунă, вĕсенче пĕр харăс 120 пин кирпĕч типĕтме пулать. Артель строительствăран ытлашши кирпĕче районти колхозсемпе учрежденисене сутать. Иртнĕ çул завод 350 пин кирпĕч туса сутнă, кăçал 700 пин кирпĕч тăвать. Иртнĕ уйăхри производство планне 123 процент тултарнă.

Заводра ĕçе лайăх пĕлекен, малта пыракан çынсем вуншарăн шутланаççĕ. Акă, И. Михайлов коммуниста илер. Вăл заводри паллă машинист, локомобиле ялан йĕркеллĕ ĕçлеттерет. Е. Михайловăпа В. Васильева резчицăсем сменăра 5 пин кирпĕч касас вырăнне 6—8 пин кирпĕч таран касаççĕ, ĕçе пахa тăваççĕ.

Чĕрĕ кирпĕче вагонеткăсем çине тиесе сарайсене ăсатнă çĕрте Е. Павлова, К. Иванова, А. Филиппова юлташсем пахa тĕслĕх кăтартаççĕ. Вĕсем ĕç нормине кулленех 120—130 процент тултараççĕ.

Кирпĕч хĕртекен цехра Н. Вотякова, А. Егорова, В. Павлова юлташсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсене заводри Хисеп хăми çине кĕртнĕ. В. Васильева, К. Баданова, В. Павлова, Г. Николаева юлташсем карьерти йывăр ĕçсене механизацилеме сĕнӳ панă. Артель членĕсене Ĕнешпуçĕнчи кирпĕч завочĕн коллективĕ пулăшу парать. Унтан час-часах опытлă рабочисем килсе çĕнĕ меслетсемпе паллаштараççĕ.

Завод коллективĕ хĕле хатĕрленессипе те чылай ĕçсем турĕ. Çак кунсенче кантур çуртне туса пĕтерчĕ, кирпĕч хĕртме 400 тонна çĕр кăмрăкĕ, пин кубометр вутă кӳрсе килнĕ.

Артель кирпĕч заводне ĕçе япăх пĕрлех хăма çуракан цеха та çĕнетсе пысăклатать. Кунта хăма çуракан рама лартаççĕ, вара сменăра 15—16 кубометр таран хăма çурма пулать. Çитес çул известь туса кăларасси икĕ хут ӳсет.

Артель малашлăхĕ пысăк. Унăн членĕсем кăçалхи производство планне срокчен—декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма пулаççĕ.

И. ВОЛКОВ.

Çĕнĕ шкул

Ишлĕ-Шетмĕн аслă урамĕ вăрăм, вăл икĕ километр ытла тăсăлать. Ял тулашĕнчи сăртлăрах вырăнта, тимĕр витнĕ икĕ хутлă çурт инçетренех курăнать. Ăна кăçал çеç хăпартса лартнă. Ку—Ишлĕ-Шетмĕн вăтам шкул çуртĕ ĕнтĕ.

Шкулăн парадниĕй алăкĕнчен пĕррем ĕш хута пырса кĕретпĕр. Пире шкул директорĕ Михаил Макарович Макаров кăтартса çӳрет. Алăкран кĕрсенех, çурçĕр енче техничкăсен пӳлĕмĕ. Унпа юнашар пысăк пӳлĕмре библиотекăпа врач кабинечĕ пулаççĕ. Хĕвелтухăçпе кăнтăр енче кĕçĕн ачасем вĕренекен класс пӳлĕмĕсем. Переменăсенче вĕренекенсем сарлака та çутă коридора тухса çӳремелле. Унта вăййăсем выляма та ирĕк.

Иккĕмĕш хута улăхатпăр. Çурçĕр енче директор пӳлĕмĕ, юнашарта — учительсен пӳлĕмĕ, малалла — лаборатори. Хĕвелтухăçпе кăнтăр енче—çутă та пысăк классем. Вĕсенче аслă классенчи ачасем вĕренмелле. Пурĕ вунă класс, вунă çутă пӳлĕм. Ишлĕ-Шетмĕри вăтам шкул çуртĕ районти ытти шкулсенчен нумай лайăх, илемлĕ те.

Çӳлти хут чӳречисенчен ял ывăç çинчи пек курăнать. Ав правленипе почта çурчĕсем. Леререхре—колхоз фермисем. Пăла тепĕр енче электростанци çуртĕ. Ăçта килчĕ унта телефонпа электричество пралукĕ карнă юпасем кăçăрăлса лараççĕ.

Шкул чӳречисенчен вăçĕ енчи ешĕл вăрман курăнать. Кăнтăр енчен вăл 200—250 метрта çеç. Кунта уй хĕрринче çирĕм çул ĕлĕкрех лартса ӳстернĕ çамрăк хырлăх илем кӳрет. Хĕвелтухăç енче кăна усă, инçетри уй-хирсемпе илсем курăнаççĕ.

Шкулăн вăçĕ гектара яхăн çĕр пур. Унта вăçĕ çурт ларать. Вĕсенчен пĕринче—учительсен хваттерĕ, тепринче, — интернат, виççĕмĕшĕнче — политехнизаци енĕпе вĕрентмелли мастерской пулать. Мастерской валли халлĕхе оборудовани çукпа пĕрех, анчах ăна çитес вăхăтсенчех туса çитерессшĕн. Шкула пĕр автомашина тата пĕр трактор уйăрса панă. Вĕсене усрама гараж та хатĕр.

Шкул çумĕнчех аслă физкультплощадка пулать. Кăçалхи кĕркунне çĕнĕ сад хывса хăвараççĕ.

— Вутă хĕл каçмалăках хатĕрлесе хунă,—тет шкул директорĕ.—Партăсемпе доскасем, шкафсемпе сĕтел-пукансем пурте çĕнĕ пулаççĕ. Вĕсене райпромкомбинат туса парать. Вăл договора срокра пурнăçласан, çĕнĕ вĕренӳ çулне çĕнĕ шкултах пуçлама май пур. Эпир хамăртан килекеннине пурне те туса çитеретпĕр. Учительсем çителĕклĕ.

Кăçал кунта вуниккĕмĕш класс та пулать. Çамрăксем çĕнĕ шкулта çĕнĕ вăйхăватпа, пирвайхи çул вĕренӳшĕн укса тӳлемесĕр вĕренме пуçлаççĕ. Çĕнĕ шкул вĕсемшĕн чăннипех пысăк парне пулса тăрать.

П. ИБАСОВ.

Первомайски районĕ.

Кино

„Совет влаçĕшĕн“

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче совет çыннисем тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешнине çутатса паракан кинофильмсене эпир чылай курнă ĕнтĕ. Йывăр та хаяр кĕрешӳре çĕнтернĕ, вăрçă йывăрлăхне хăйсем çинче тӳссе ирттернĕ совет çыннисене лайăх сăнласа кăтартнă çĕнĕ картинăсем тухни савăнтарать кăна. «Совет влаçĕшĕн ятлă фильм*) çакăн пек произведенисен шутне кĕрет. Ăна М. Горький ячĕпе тăракан киностуди В. Катаев çырнă «За власть Советов» романĕ тăрăх ӳкерсе кăларнă.

...Одесса çунать. Хулана паттăррăн хӳтĕленĕ Совет Çарĕн юлашки чаçĕсем тухса каяççĕ. Çакăн пек пуçланать çĕнĕ фильм. Малтанхи кадрсемех вăрçă вăхăтĕнчи йывăр кунсене кăтартса параççĕ.

Акă эпир Матрена Терентьевна Перепелицкая (унăн рольне Н. Никитина вылять) патĕнче Петя ятлă ачана куратпăр. Ют ачапа амăш пек пăхакан ырă кăмăллă хĕрарăм кĕтмен çĕртен çак пионер хăйĕн ача чухнехи юлташĕн, хăйĕншĕн хаклă çыннăн ачи пулнине пĕлет. Унăн куçĕ умне тахçан ĕлĕкхи, хăйне Мотя тесе чĕннĕ чухнехи юлташĕсем—Петькăпа Гаврик тухса тăраççĕ. Кино куракансем те кунта «Белеет парус одинокий» фильмри геройсем çинчен сăмах пынине тавçăрса илеççĕ.

Матрена Терентьевна ăса илнĕ, хăйне асăрхаманнăн ӳпкелешекен Петька—Петр Васильевич Бачей (С. Курилов артист), Мускавра юрист пулса ĕçлекенскер, 1941 çулхине çулла хăйĕн ывăлĕпе Петькăпа Одессăна килнĕ пулнă. Хăй ача чухне пурăннă хула урамĕсем тăрăх çӳреме, ĕлĕкхи тусĕсемпе тĕл пулса калаçма, вăл тахçанах ĕмĕтленнĕ ĕнтĕ. Петькăна ашшĕ «Гаврик пиччĕшĕпе»—Гаврил Семенович Черноиваненкăпа паллаштарать. Çамрăк ачашăн çак тинĕс хĕрринчи хулара курмалли темĕн чухлех. Анчах çак савăнăç нумая пымасть—вăрçă пуçланать. Вĕсен уйрăлма тивет. Ашшĕ фронта тухса каять, Петькăпа хĕрарăмсемпе пĕрле пăрахут çине ларса хăварать.

Вăрçă çынсен ĕмĕчĕсене татать. Петя Одессăран тухса каяймасть, Матрена Терентьевнăна тĕл пулать...

Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратакан мирлĕ совет çыннисем тăшмана хирĕç кĕрешме тăраççĕ. Парти обкомĕ хушнипе Черноиваненко та хуларах юлать. Ăна хулара вăрттăн ĕçлекен организацие ертсе пыма хушнă. Акă вăл çунакан хулан пушанса юлнă урамĕсем тăрăх машина çинче ларса пырать. Гаврил Семенович çывăрать, унăн сăнĕнченех вăл çав тери ывăнни палăрать. Ахăртнех унăн темиçе талăк хушшинче те куç хупса илме вăхăт пулман, ирĕксĕрех çакăн пек, кăштах та пулин май пур чухне, пăртак канса илме тивет. Машина парти райкомĕн çурчĕ умĕнче чарăнать. Черноиваненко пушă коридорсем тăрăх хăйĕн кабинетне кĕрет. Халĕ ĕнтĕ вăл ывăннине асăрхамастăн, хĕрӳ чĕреллĕ, хăюллă хастар коммуниста куратăн. Черноиваненко райкомра хăйĕнпе пĕрле ĕçленĕ Колесничука тĕл пулать, ăна тăшман йышăннă хулара ĕçлеме задани парать. Вăрттăн ĕçлеме флакансем «аяла», хула çывăхĕнчи катакомбăсене (çĕр айĕнчи шăтăксене) каясси çинчен пĕлтерет.

Б. Чирков артист çак роле лайăх выляни пе пула пирĕн куç умне чăн-чăн руководитель сăнарĕ тухса тăрать.

Тăшман вăхăтлăха хуçаланакан хулара парти хушнипе вăрттăн ĕçлекенсем—Тăван çĕршывшăн кĕрешекен совет çыннисене, партизансене пĕтĕçтерсе, ертсе пыракан штаб—катакомбăсенче вырнаçнă. Малтан асăннă геройсем тăвăр та нӳрĕ çĕр шăтăкĕсенче тĕл пулаççĕ. Тăшман çав хĕрӳллĕ патриотсене пĕтерме тăрăшать, пурнăç условийĕсем йывăр: макарона темиçешер грамм пайланă самантсем те пулаççĕ. Анчах та Тăван çĕршыва чунтан парăннă çынсем йывăрлăха пăхмасăр, пурнăçа шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Гитлеровецсен склачĕсене çунтараççĕ, чугун çулсене аркатаççĕ, листовкăсем сараççĕ. Тăшман урлăйĕнчи çĕр çунать.

Эпир куракан геройсем—рядовой совет çыннисем, вĕсем ыттисенчен нимĕн енчен те уйрăлса тăмаççĕ, вĕсем тахçанах паллă çынсем пек туйăнаççĕ.

Фильмри геройсем асра юлаççĕ, вĕсем кăмăла каяççĕ. Хăюллă партизан Святослав Марченко (Ю. Панич артист), вилĕмрен хăрамасăр юлташне çăлма тăрăшакан, ырă кăмăллă хĕр Валя (В. Хмара артистка) сăнарĕсене манма çук.

Б. Тенин артист Колесничук рольне талантлă выляннипе те палăртмалла. Парторганизаци хушнипе Колесничук хулара комиссионнăй магазин уçать. Вăл гитлеровецсемпе йăпăлтатать, хăйне хуçа пек тыткалать. Ăна сутуçăсем улталаççĕ, анчах гитлеровецсем вăл чăн-чăн совет çынни пулнине, магазин çумĕнчи пӳлĕмре партизансем пĕр-пĕрне тĕл пулнине пĕлмеççĕ.

Фильмра чĕрене хумхантаракан эпизодсем нумай (Петр Бачей партизансен отрячĕн командирĕпе Дружининпа, фашист тумне тăхăннăскерпе, тĕл пулни; «атăçă» провокатор патĕнче пулса иртнĕ ĕçсем, Черноиваненко апат-çимĕç шыраса пĕр колхозница патĕнче пулни). Уйрăмах гитлеровецсем Дружинина, Святослава тата Валькăна персе вĕлерме илсе кайнине ӳкерсе кăтартнă. Урам икĕ енĕпе гестаповецсем тăрса тухнă. Геройсем, хăйсен пурнăçне тĕрĕс ăнланнипе пĕлсе, эпир çĕнтерессине çирĕп шанса, хăюллăн утаççĕ, пуçа усмаççĕ. Хула халăхĕ партизансене юлашки çула ăсатать. Сасартăк революционерсен авалхи юррин кĕвви илтĕнсе каять, Дружинин çăвар уçмасăр юрлама тытăнать. Гитлеровецсем вăлăхах юрра чарса лартма хăтланаççĕ. Юрă вăйланнăçемĕн вăйланса пырать, хулара хăватлăн янăрать. Тăшмана курайманни, халăх тарăхни пăшаллă гитлеровецсенчен вăйлărах!

Часах хула çумĕнче тупăсен сасси кĕрлеме пуçлать. Совет Çарĕ ирĕкĕр захватчиксена хĕвеланалăçнелле хăвалать. Кĕтнĕ кун çитет: тăшман тылĕнче вăрттăн ĕçленĕ геройсем катакомбăсенчен тухаççĕ, совет салтакĕсемпе пĕрлешеççĕ. Мĕн тери савăнăç! Кино куракансем те çак кадрсене ялан хавасăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Куракансенчен кашниех çак фильма—совет çыннисен вăй-хăвачĕпе паттăрлăхне, вĕсен ырă сăнарне кăтартса паракан кинопьеçе—малтан пуçласа вĕçне çитиччен интересленсе пăхать, ăна ӳкерсе кăларнă творчествăлла коллектива тав тăвать. Ăна çывăх вăхăтрах чăвашла куçарса кăларни те лайăх пулĕччĕ.

С. ДАНИЛОВ.

*) «За власть Советов». Сценари авторĕсем: В. Катаев, С. Клебанов. Фильма лартаканĕ — Б. Бунеев. Операторсем: В. Дульцев, М. Пилихина.

Рабочисен пуçарулăхĕ ӳсет

КАНАШ. Кăçалхи çичĕ уйăх хушшинче вагонсем юсакан завод планран ирттерсе 20 вагон юсарĕ, материалсем, топливо, электроэнерги çĕршер пин тенкĕлĕх перекетлерĕ. Çак çитĕнӳе вăл социализмла ăмăрту аллă сарăлнипе, техникăпа тата малта пыракансен опычĕпе лайăхрах усă курма пуçланипе турĕ.

Ремонтпа механически цехри А. Алексеев строгальщик пĕр вăхăтрах тăватă станокпа ĕçлет. Çавна пула вăл çулталăкри нормăна срокчен тултарчĕ. Кустăрма юсакан цехри Т. Романовпа Н. Айхуганов токарьсем, механически цехри комсомол организацийĕн секретарĕ Г. Дербенев тата Е. Урослов токарьсем ĕç нормине тăтăшах 1,5—2 хут ирттерсе тултараççĕ.

Инструментсем тăвакан цехри С. Никитин токарь гидравлически домкрат шухăшласа кăларчĕ. Унпа усă курса И. Фадейчев, В. Кисин, Я. Никонов слесарьсем ĕç тухăçлăхне виçĕ хут ӳстерчĕç.

И. ЖУРАВЛЕВ.

Чăвашсен паллă композиторĕ

Юлашки çулсенче чăваш совет музыки паллă çитĕнӳсем турĕ. Халĕ пирĕн хамăрăн талантлă композиторсем ӳссе çитĕнчĕç, вĕсем тĕрлĕ музыкăлла произведенисем—юрăран пуçласа оперăна çитиччен çыраççĕ. Ку ĕнтĕ чăн та пире савăнтарать, малалла татах та лайăхрах ĕçлес кăмăла çĕклентерет. Çак çитĕнӳсене палăртнă май, пирĕн асра чи малтанах чăваш музыкине ӳстерсе аталантарас ĕçре пĕтĕм вăй хурса ĕçленĕ паллă композиторсен Ф. Павловăн, С. Максимовăн тата В. Воробьевăн ячĕсем тухса тăраççĕ. Паян кун вĕсенчен пĕри те пирĕн хушăра çук пулсан та, вĕсем пирĕнпе пĕрлех, вĕсен ячĕсене, вĕсем тунă пысăк ĕçсене чăваш халăхĕ ялан асра тытса тăрать.

Чăвашсен чи малтанхи тата пултарулă композиторĕсенчен пĕри Степан Максимович Максимов пулнă. Вăл 1892 çулта, октябрĕн 31-мĕшĕнче, Тăвай районĕнчи Нăрваш ялĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. 1907 çулта, ялти икĕ класлă шкула пĕтернĕ хыççăн, вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕрет. Çав çулсенчех Чĕмпĕрти шкулта Ф. П. Павлов та вĕреннĕ. Вĕсем иккĕшĕ пиччĕ туслă пулнă. Çак шкулта вĕреннĕ чухнех, вĕсен музыка енĕпе ĕçлес пултарулăхĕ уççăн палăрса тăнă. Çавна пула, 1911 çулта, çак шкула пĕтернĕ хыççăн, И. Я. Яковлев вĕсене иккĕшне те унтах музыкăпа юрă учителĕсем пулса ĕçлеме хăварать. Вĕсем унта симфониллĕ оркестра та, хора та ертсе пынă.

С. Максимов 1914 çулта Хусан хулинче экстерпа юрă учителĕн ятне илме тивĕç пулать. 1919—1921 çулсенче вăл Чĕмпĕр уездĕнче учительра, каярахпа Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи çутĕç пайĕнче тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлет. 1919 çулта Степан Максимович Коммунистсен партийĕн ретне кĕрет. 1925 çулта вăл Шупашкара ĕçлеме куçать. Пĕр çул хушши Çутĕç Комиссариатĕнче ĕçленĕ хыççăн, 1926 çулта Шупашкарти музыка шкулĕнче ĕçлеме пуçлать. С. Максимов 1929 çулта, музыка техникумне уçнă хыççăн, унăн директорĕ пулса ĕçлет. Композиторла пултарулăха тата ытларах ӳстерес тесе, вăл 1930 çулта Мускаври консерваторие вĕренме кĕрет. Кунта вăл, вырăссен паллă композиторĕсем—Р. Глиэр тата Ан. Александров профессорсем патĕнче вĕренет. 1935 çулта, консерваторирен вĕренсе тухнă хыççăн, вăл каллех Чăваш республикине таврăнать, музыка училищин директорĕ пулса ĕçлет, творчествăлла ĕçе активлăн хутшăнать.

С. Максимов 1951 çулхи августăн 25-мĕшĕнче вилнĕ.

Творчество енĕпе ĕçлеме С. М. Максимов 1915 çулта, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçленĕ чухнех тытăннă. Малтанах вăл чăваш халăх юррисене хорпа юрлама илемлетнĕ. 1918 çулта Чĕмпĕрте шапирографпа пичетлесе кăларнă «Чăваш халăх юррисем»—унăн пĕрремĕш юрă кĕнеки пулса тăрать.

С. Максимов çырнă юрăсен хисепĕ (халăх кĕввисем тăрăх йĕркеленĕ юрăсемпе пĕрле) темиçе çĕр шутланать. Вĕсем хушшинче: хорпа тата пĕччен юрламалли юрăсем, ача-пăча юррисем, симфониллĕ оркестрпа, рояльпе тата сĕрме купăс квартечĕпе калламалли произведенисем, духовой оркестр валли çырнă чăваш маршĕ т. ыт. те. Унăн юррисем хăй пĕччен кăларнă тăватă сборникре тата ытти авторсемпе пĕрле кăларнă виçĕ сборникре пичетленсе тухнă. Унсăр пуçне вăл чăваш музыки тата халăх музыкин творчествин ыйтăвĕсемпе нумай статьясем çырса пичетлесе кăларнă. 1935 çулта унăн чăвашла çырнă «Музыка çырăвне вĕренмелли кĕнеке» тухнă.

С. М. Максимов чăваш халăх юррисене пухас тата тĕпчесе вĕренес енĕпе тунă ĕçсем те калама çук пысăк. Çак ĕçе вăл 25 çул хушши пĕр ывăнмасăр тимлĕн туса пынă. «Халăх юррине питĕ хакла хурса, вĕсене тĕрĕсрех çырса пуçтарни чăваш музыкине малалла ярĕ тесе, эпĕ 1917 çултан пуçласа юрăсем пуçтарма тытăнтăм», тесе çырать С. Максимов хăйĕн 1924 çулта тухнă юрă сборникĕн умсăмахĕнче. Вăл çырса илнĕ халăх юррисен шучĕ икĕ пинрен те иртет. Вĕсем хушшинче хамăр республикăри, Çĕпĕрти, Пушкăрт тата Тутар республикинчи, Ульяновск тата Куйбышев облаçĕсенчи чăваш халăх юррисем пур. Паллă халăх юрăçинчен—Федор Гаврилович Гаврилоран кăна вăл 700 юрă яхăн çырса илнĕ. Вăл пухнă халăх юррисене виçĕ кĕнеке туса пичетлесе кăларнă.

С. Максимов халăх юррисемпе хăйĕн творчествинче анлăн усă курнă. Вĕсенчен нумайăшне вăл хорпа юрлама тата рояльпе каласа пĕччен юрлама илемлетнĕ. Вĕсем халăх хушшинче анлăн сарăлнă. «Ан авăн шĕшкĕ», «Пахчи-пахчи», «Улăхра кĕтӳ», «Ямпах урам», «Лутрăях та шĕшкĕ», «Хĕрĕх чалăш хĕрлĕ ту», «Ĕнтĕ вăрман шавлать», «Сăлтăр виттĕр», «Уй варринче», «Кик-кик хуркайăк» тата ыттисем те—чăваш халăхĕн юратнă юррисем пулса тăраççĕ. Хутăш хорпа юрлама йĕркеленĕ юрăсенчен уйрăмах «Ака-суха юррипе», «Атьăр, хĕрсем, выляма» юрăсене палăртмалла. Ку юрăсен кĕввисем те питĕ илемлĕ, вĕсем ялавах ятлакансен чунне хумхантараççĕ. Калас пулать, автор çак юрăсене питĕ пысăк ăсталăхпа йĕркеленĕ, композитор хор янăравлăхĕсене лайăх пĕлни вĕсенче уççăн курăнать. Е «Пирĕн атте сазан пул», «Анатран хăпарать шурă пăрахут» ятлă шӳтлĕ юрăсене илер-ха. Вĕсене те халăх питĕ килĕштерет, ялан ах чун-чĕререн савăнса итлет.

С. Максимов хăй çырнă юрăсем те нумай. Вĕсенчен вăрçă умĕнхи çулсенче халăх хушшинче анлăн сарăлнă çак юрăсене палăртмалла: «Колхозниксен ĕç юрри», «Юхмĕ-юхмĕ тек куççулĕ», «Çуллахи пек», «Хутлам-хутлам хут купăс», «Пирĕн мучи Микулай», «Çĕнĕ частушкăсем», «Комсомолка Уçине» т. ыт. те.

Консерваторинче вĕреннĕ чухне симфониллĕ оркестр валли çырнă увертюра тата рояльпе калама çырнă сонатина пысăк формăллă произведенисен шутне кĕреççĕ. Вĕсем те чăваш халăх музыкипе тачă çыхăнса тăраççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем авторăн пысăк формăллă произведенисем çырас енĕпе пултарулăх пулнине те уççăнах кăтартса пăраççĕ.

С. Максимов чăваш музыка искусстви валли нациле кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе тунă пысăк ĕçсене те палăртмасăр иртме çук. Эпир сӳлерех вăл нумай çул хушши Шупашкарти музыка шкулĕн, каярахпа музыка техникумĕн директорĕ пулса ĕçлени çинчен асăннăччĕ. Анчах та калас пулать, вăл директор кăна мар, музыкăна вĕрентекен ăста учитель те пулнă. Чăвашсен хальхи композиторĕсем пурте тенĕ пекех (Г. Хирбю, Г. Лебедев, А. Орлов-Шузьм, В. Ходяшев, А. Токарев, Ф. Васильев, çак статья авторĕ тата ыттисем те) тĕрлĕ çулсенче ун патĕнче вĕреннĕ. С. Максимов ялан ах общество ĕçе активлăн хутшăнса ĕçленĕ. Вăл нумай конференцисемпе съездсенче музыка ыйтăвĕсем тăрăх докладсем тунă, тухса каласнă.

1934 çулта С. Максимова, вăл чăваш музыка искусствине аталантарас ĕçре тунă ĕçсене пысăка хурса хакласа, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн ятне панă.

Степан Максимовичăн музыка произведенийĕсем, теориле статьясем нумай, вĕсенчен чылайăшĕ халиччен пичетленсе тухман. Çавна май С. Максимовăн музыка произведенийĕсене, алçырăвĕсене упрас, тĕпчесе вĕренес, пичетлесе кăларас ыйтусем пирĕн умма анлăн тухса тăраççĕ. Республикăри Культура министерствин, наукăпа тĕпчев институчĕн, Чăваш композиторĕсен Союзĕн тата Чăваш государство издательствин ку тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла, вăл хатĕрлесе хăварнă юрă кĕнекисемпе теориле статьясене хăвăртрах халăх патне çитерме тăрăшмалла. Чăваш государство филармонийĕн художествăлла коллективĕсемпе солисчĕсен репертуарĕнче С. Максимовăн произведенийĕсем тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла, вĕсемпе концертсенче тата радио урлă халăха анлăн паллаштармалла.

С. Максимов творчестви—формипе национле, содержанийĕпе социализмла чăваш музыка культурине тунă çĕрте пысăк вырăн йышăнать. Композиторăн пурнăçĕпе паха ĕçĕсем вăл халăхшăн, унăн музыка культурине аталантарасшăн пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшса ĕçленине лайăх кăтартса параççĕ. Çавăнпа та унăн ятне халăх ялан ырă ятпа асăнать.

Ф. ЛУКИН.

Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче



Венгри Халăх Республики
Сталинвароşри И. В. Сталин ячĕпе тăракан комбинат.
Мадьяр фото фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пăрахутсемпе карапсем тăвас ĕç вăйланать

Китай Халăх Республикинче суднăсем тумалли анлă программăна пурнăçлаççĕ. Кăçал Китайри судоверфьсенче тĕрлĕ суднăсем 1952 çулхинчен пилĕк хут çурă нумайрах туса кăлараççĕ.

Юханшыв пăрахучĕсем, тинĕс тăрăх пассажирсемпе грузсем турттарса çÿрекен суднăсем, пулă тытса çÿремелли тĕрлĕ йышши суднăсем, землечерпалкăсем, чугун çул вагонĕсене тиесе шыв урлă каçармалли паромсем, шыв çинчи мастерскойсем тăваççĕ.

Юлашки çулсенче çĕршывра çĕнĕ судоверфьсем тунă, кивĕ верфьсенчен чылайăшне çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă. Дальний хулинчи пысăк судоверфьсене улăштарса çĕнетеççĕ. Вĕсене улăштарса çĕнетнĕ хыççăн океан çинчи 10 пин тонна водоизмещениллĕ тата унтан та пысăкрах, пассажирсем илсе çÿрекен карапсем туса кăларма пуçлаççĕ.

Сăрт-ту промышленноçне аталантараççĕ

Польшăри Лодзь воеводствинчи Ленчица патĕнчи тимĕр тăпри бассейнĕнче пĕрремĕш пысăк рудника эксплуатацилеме тытăннă. Кунта тимĕр тăпри кăларас ĕçе пĕтĕмпех механизациленĕ. Бассейнра çĕнĕрен темиçе çĕнĕ рудник тăваççĕ.

Вăрçă хыççăнхи вăхăтра, уйрăмах ултă çуллăх плана пурнăçласа пынă тапхăрта, геологи енĕпе тĕпчев ĕçĕсем чылай туса ирттерчĕ. Çавăн чухне Польшăра тимĕр тăпри запасĕсем çур миллиард тонна ытла пуррине палăртнă.

Шывлă хăйăр вырти тимĕр тăпри кăларас ĕçре чылай чăрмантарать. Халĕ вара Польшăри ученăйсемпе инженерсем çавăн пек хăйăр типĕтмелли майсем тупнă, çав майсемпе практикăра усă кураççĕ. Геологи условийĕсем йывăр вырăнтан тимĕр тăпри кăларас тĕлĕшпе ученăйсем çĕнĕ меслетсем тупса панă. Çавна май çĕршывра тимĕр тăпри кăларасси хăвăрт ÿсе пырать. 1949 çулта тимĕр тăпри пĕтĕмпе 684,4 пин тонна кăларнă пулсан, 1955 çулта—1.653 пин тонна кăларнă.

Пилĕк çуллăх планра промышленноçăн çак отраслĕне малалла аталантарма палăртнă.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси ÿсет

Польша Халăх Республикинчи Клеменсувра çу комбиначĕ лартаççĕ. Комбинатăн хăшпĕр цехĕсем продукци туса кăларма пуçланă. Çитес икĕ çул хушшинче комбината пĕтĕмпех туса пĕтерĕççĕ.

Польшăра çăмăл промышленноçпа апат çимĕç промышленноçне аталантарма хытă тăрăшаççĕ. Ултă çуллăх плана тултарассишĕн кĕрешнĕ вăхăтра Замбрув, Андрыхув, Пекроков хулисенче пир-авăр комбиначĕсем, Соколувра пысăк сахăр завочĕ, Çĕнĕ Таргра атă-пушмак комбиначĕ лартнă. Кивĕ заводсемпе фабрикăсене улăштарса çĕнетнĕ тата пысăклатнă.

Çакна май халăха куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç туса кăларасси чылай ÿсет. 1955 çулта—ултă çуллăхăн юлашки çулĕнче—çĕршывра пир-авăр вăрçă чченхинчен 2,5 хут, сахăр—2 хут, атă-пушмак—2 хут нумайрах туса кăларнă. Çав вăхăтрах çу, аш-какай, тумтир, хуçалăхра кирлĕ япаласем туса кăларасси те ÿснĕ.

Çĕнĕ пилĕкçуллăхра хулари тата ялти ĕçсыннисен пурнăçне хăвăрт ÿстерсе пыма, çавна май халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан çĕнĕ предприятисем татах та тума палăртнă.

Государствăн ялти хуçалăхĕсем

Демократиллĕ Вьетнам Республикинче государствăн ялти хуçалăхĕсенчи работникĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Ăна Ханой хулинче ирттернĕ. Канашлăва пухăннисем кăçалхи пĕрремĕш çур çулти ĕçсен итогĕсене тунă, государствăн ялти малтанхи хуçалăхĕсене тăвас ĕçри опытпа пĕр-пĕрне паллаштарнă, вĕсене малалла аталантармалли майсем çинчен сÿтсе явнă.

Республикăра государствăн ялти хуçалăхĕсене нумай пулмасть тума пуçланă. Халĕ çĕршывра çавăн пек 16 хуçалăх пур, вĕсен çĕрĕ 60 пин гектар шутланать.

Государствăн ялти хуçалăхĕсем сакăр çул хушши усă курмасăр выртнă 1.200 гектар çинчи кофе плантацийĕсене юсаса йĕркеленĕ, çĕнĕрен 90 гектар çине кофе йывăççисем лартнă.

Пĕрремĕш çур çулта халиччен сухаламан тата нумай вăхăт хушши сухаламасăр выртнă ултă пин гектар çĕре сухаласа кăпкалатнă.

Государствăн ялти хуçалăхĕсем çумĕнче сĕт-çу фермисем, лайăх ăратлă выльăх-чĕрлĕх фермисем тăваççĕ. Механизаторсем вĕрентсе хатĕрлемелли курссем ĕçлеççĕ. Вĕсем 500 тракторист ытла вĕрентсе кăларнă ĕнтĕ. Тепĕр темиçе уйăхран курссенчен полеводсемпе агрономсем вĕренсе тухаççĕ.

Демократиллĕ Вьетнам Республикине государствăн ялти пĕрремĕш хуçалăхĕсене организацилес ĕçре Совет Союзĕ, Китай, Чехословаки тата ытти тăванла республикăсем нумай пулăшаççĕ. Тăванла республикăсенчен илсе пынă тракторсен шучĕпе государство хуçалăхĕсенчи трактор паркĕ 10 хут ÿсет.

Совет Союзĕ Афганистана пулăшать

КАБУЛ, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Çапла пĕлтерĕччĕ: августăн 16-мĕшĕнче Афганистан Халăх Совечĕ Афганистанăн экономикине аталантарма Совет Союзĕ 100 миллион доллар кивçен парасси çинчен тунă килĕшĕве çирĕплетнĕ.

Çакна май Халăх совечĕ пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Унта çакна палăртнă: кивçен укçана льготăллă условисемпе пани политика енĕпе нимĕнле обязательствăсем те йышăнтарма палăртмасть.

Совет Союзĕ кивçен паракан укçапа Афганистанăн пиллĕк пысăк предприятийсем тăвас ĕçре усă кураççĕ, вăл Афганистан правительствине хăйĕн çĕршывĕн хуçалăхне аталантармалли пилĕк çуллăх плана пурнăçлама пулăшать.

Совет правительстви, тенĕ малалла Халăх совечĕ пĕлтернинче, Афганистана кивçен укçа панă кăна мар, вăл ăна палăртса хунă ĕçсен планне пурнăçлама техника енĕпе те пулăшать. Совет Союзĕн организацийĕсемпе Афганистанăн тивĕçлĕ министерствисем хушшинче вунă контракт ытла тунă. Контрактсенче азотпа тук завочĕ, электростанцисем, Салрнг тăвĕ урлă автомобильсем çÿремелли çул, автомобильсем юсамалли мастерскойсем, ирригаци сооруженийĕсем валли оборудовани тăвакан завод тата ытти предприятисем тăвас тĕлĕшпе тĕпчев тата проект ĕçĕсене пурнăçлама палăртнă.

Çакă вăл, тенĕ пĕлтернинче, Совет правительстви пурнăçĕн те паллă пилĕк принципне пиксĕ çинче мирлĕн килĕштерсе пурăнас тĕлĕшпе тытса пыракан политикăпа килĕшсе тăрать.

Совет Союзĕ паракан пулăшăвăн паллă уйрăмлăхĕ вăл, тенĕ пĕлтернинче, ĕçсене лайăх тата хăвăрт тунинче пулать. Кăçалхи июньпе июль уйăхĕсенче пĕрремĕш контрактсем çине алă пуснă. Совет специалисчĕсем халех ĕнтĕ ĕçлеме тытăнчĕç. Кабул аэродромне реконструкцилес, Баграмире аэродром тăвас тĕлĕшпе пуçланă тĕпчев ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ, азотпа тук завочĕн строительствинче тĕпчев ĕçĕсем пуçланнă, Совет Союзĕн çул-йĕр тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен специалисчĕсем пырса çитнĕ т. ыт. те.

Палăртса хунă предприятисене тăвас ĕçре Совет специалисчĕсем техника енĕпе кăна пулăшмаççĕ, вĕсем Афганистан правительствине çав предприятисем валли специалистсем вĕрентсе хатĕрлеме те пулăшаççĕ.

Афганистан министерствисемпе организацийĕсен ертсе пыракан работникĕсем совет специалисчĕсен ĕçĕсене пысăка хурса хаклаççĕ. Совет специалисчĕсен ĕçне Афганистан халăхĕн мĕнпур сийĕсем ырлаççĕ.

Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнине хирĕç

ПАРИЖ, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Германи влаçĕсем Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнине хирĕç Францири ĕçсыннисем çав тери тарăхса протестлеççĕ. Францири темиçе миллион ĕçсыннине пĕрлештерсе тăракан Пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕн бюровĕ пичетлесе кăларнă заявленире çапла каланă: Германири Коммунистсен партине ĕçлесе тăма чарни, фашизма хирĕç кĕрешекен нумай организацисене салатса яни, профсоюзсен членĕсене тата ĕçсыннисен предприятисенчи комитечĕсен представителĕсене хирĕç мерăсем йышăнни, ухтарусем туни, хаçатсене хупни, çынсене арестлени,—çаксем пурте вĕсем Германие хĕçпăшаллантарнине хирĕç тăракансене, Хĕвеланăç Германири реваншистсен вăрçа хатĕрленмелли планĕсене хирĕç кĕрешекенсене хĕсмелли мерăсем пулса тăраççĕ.

Пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕн бюровĕ Францири ĕçсыннисем демократилле ирĕклĕхсемшĕн, миршĕн, Германие хĕçпăшаллантарнине хирĕç кĕрешекен нимĕç халăхĕпе пĕр шухăшлă пулни çинчен пĕлтереççĕ. Бюро профсоюз организацийĕсемпе ĕçсыннисене Федеративлă Германи Республикин Парижри посольствине протестсем ярса пама чĕнет.

Сена департаментĕнчи профсоюзсен пĕрлешĕвĕне металлурги промышленноçĕнчи ĕçсыннисен федерацийĕ те çавăн пек протестсем пичетлесе кăларнă. Федеративлă Германи Республикин Парижри посольствине федераци ярса панă телеграммăра çапла каланă: «Пирĕн çĕршыври металлурги промышленноçĕнчи ĕçсыннисен ячĕпе федераци бюровĕ влаçсем Германири Коммунистсен партине тата демократилле ытти организацисене ĕçлесе тăма чарнине хирĕç татăклăн протестлать». Ку документра çакна палăртнă: Хĕвеланăç Германи влаçĕсен решенийĕ Европăри мирпе Франци умне хăрушлăх кăларса тăратать.

Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки Лондонра пухнă конференцире

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Паян кăнтăрла иртнĕ хыççăн Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки Лондонра пухнă конференци юлашки ларăвĕ пулнă.

Конференци участникĕсем хăйсен ĕçне мĕнле вĕçлесси çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явнă. Вĕсем Суэц ыйтăвне мирлĕн тата тĕрĕс татса парас тĕлĕшпе конференци результачĕсемпе лайăхрах усă курма тăрăшнă.

Çакна аса илтерес пулать: ĕнерхи ларура США делегацийĕ тата унăн проектне ырланă Англи, Франци тата Çĕнĕ Зеланди представителĕсем конференци ĕçне вĕçлеме хĕвеланăçĕнчи державăсемшĕн юрăхлă йĕрке йышăнтарма хăтланнă. Çак йĕрке Америка шухăшĕсене кăна хисепленĕ, ыттисен шухăшĕсене хисеплемени çинче тытăнса тăрать. Ку вăл çак делегацисен сĕнĕвĕнче палăрнă. Америка проекчĕшĕн тăракансен шутĕнчен суйланă ушкăн çак проекта Египета патăр, Египет правительстви проектпа килĕшнине ыйтса пĕлтĕр, тенĕ сĕнÿре. Ыйтăва сÿтсе явнă вăхăтра ку сĕнÿ авторĕсем çапла «ăнлантарса каланă»: Инди делегацийĕн проектне ырлакан делегацисем ăна Египет правительствине хăйсем пама пултараççĕ, эпир хирĕç тăмастпăр», тенĕ.

Çапла ĕнтĕ, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе хĕвеланăçĕнчи ытти державăсен делегацийĕсем конференцие икĕ пая уйăрма, Америка сĕнĕвĕсене Египета панă чухне ун çине ультиматум хартмалла тăвас çул çине тăма хăтланнă. Çакăн пирки ĕнер СССР, Инди тата Цейлон делегацийĕсем татăклăн хирĕçлесе каланă.

Конференцие икĕ пая уйăрас, Даллес планĕнче палăрса тăракан пĕр шухăша закон вырăнне хурас, Инди проектне шута илмесĕр хăварас тĕллев лартакан çав сĕнÿсене хирĕç паян Совет делегацийĕн пуçлăхĕ Д. Т. Шепилов çĕнĕрен тухса каланă.

— Канашлу вăхăтĕнче каланă тĕрлĕ шухăшсем çинчен,—тенĕ вăл,—Египета, интереслентерекен енсене, тĕнче общественноçне пĕлтересси вăл демократизмăн пурнăçĕн те паллă требованийĕ пулса тăрать. Çĕнĕ Зеланди представителĕ Египета канашлу участникĕсен пĕр ушкăнĕн шухăшне кăна пĕлтерме сĕнет. Ку вăл демократизмăн çав принципне сĕмсĕррĕн пăсни пулĕччĕ.

Д. Т. Шепилов çапла каланă: Совет делегацийĕ шучĕпе, канашлу ĕçĕн паха енĕ юлашкинчен кĕскен пĕлтернине палăрма пултарĕччĕ. Унта тĕнче общественноçне çакăн çинчен пĕлтермелле: канашлу участникĕсем Суэц ыйтăвне мирлĕн татса пама, çак ĕçре Египет халăхĕн интересĕсене Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çÿретес ирĕклĕх интересĕсемпе çыхăнтарма тăрăшаççĕ, тесе кăтартса памалла.

СССР делегацийĕн пуçлăхĕ çавнашкал кĕске пĕлтерÿ проектне вуласа панă. Эпĕ ку проектăн кашни сăмахне çаплипех хăвармалла тесе каламастăп, тенĕ вăл. Пĕлтернине йышăнас шухăша ырласан, кунта пуриншĕн те юрăхлă текст пирки те каласса татăлма пулать.

СССР представителĕ тухса каланă хыççăн пуçланнă дискусси вăхăтĕнче тĕрĕс шухăш çиеле тухнă, Египет правительствине çак конференципе сÿтсе явнă ыйту тăрăх мĕнпур шухăшсемпе мĕнпур сĕнÿсем çинчен пĕлтермелле, тесе йышăннă. Çĕнĕ Зеланди представителĕ хăйĕн сĕнĕвне каялла илнĕ. Конференци участникĕсем пурте Франци делегацийĕн пуçлăхĕ К. Пино панă сĕнĕве йышăнма килĕшнĕ. Суэц каналĕ пирки пухăннă конференцие хутшăннă 22 çĕршыв представителĕсем хăйсем каланă сăмахсен пĕтĕм стенографи отчетне Египет правительствине пĕлтерме конференци председательне хушаççĕ, тенĕ çав сĕнÿре.

Кун хыççăн конференци хупăнни çинчен пĕлтернĕ.

Египет Даллес сĕнĕвне йышăнмасть

КАИР, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). США государство секретарĕ Даллес Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки Лондонра пулса иртнĕ конференцире тăратнă сĕнĕве Египет общественноçĕпе хаçат-журналĕсем ырламаççĕ, империализмла державăсем Египета хăйĕн Суэц каналĕ тĕлĕшĕнчи суверенитетлă прависемсĕр тăратса хăварма, ку тĕлĕшпе «тĕнчери çĕршывсен правленийĕ» текĕскерне туса хума хăтланнине хытă сивлеççĕ.

Хăшпĕр государствăсем Америка сĕнĕвне кăштах тÿрлетÿсем кĕртрĕç, вĕсене Даллес пĕр тăхтаса тăмасăрах йышăнчĕ. Анчах çак тÿрлетÿсем, тесе çыраççĕ хаçатсем, Америка проекчĕн империализмла, Египета хирĕçле тĕллевне улăштармаççĕ.

«Египет,—тесе çырать «Аль-Гумхурия» хаçат,—тĕнчери çĕршывсен мĕнле те пулин правленине туса хумалла тенипе килĕшес çук». «Иджипшн газетт» умстатьинче çапла каланă: Даллес планĕ вăл Египетăн Суэц каналĕ пĕтĕмпех ют çĕршывсен влаçне пăхăнса тăмалла тунине пĕлтерĕ пулĕччĕ.

«Аль-Гумхурия» хаçат çапла çырать: Даллес планĕ ыйтăва татса пама пулăшмасть, мĕншĕн тесен вăл хĕвеланăçĕнчи державăсен халиччехи сĕнĕвĕсен кăштах улăштарнă варианчĕ кăна пулса тăрать.

«Аль-Гумхурия» хаçатра пичетлесе кăларнă статьяра «Ат-Тахрир» издательствин ответлă руководителĕ Анвар Садат çапла çырать: Даллес «Египет суверенитетне хисеплени çинчен» калать, çак вăхăтрах государствăра тепĕр государство туса хума палăртакан сĕнÿ парать. Çапла ĕнтĕ унăн сăмахĕсемпе ĕçĕсем пĕр-пĕрине пе килĕшсе тăмаççĕ.

Англи хаçачĕсем Лондонри конференци çинчен

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри конференцин ĕнерхи ларăвĕнче хĕвеланăçĕнчи державăсем Суэц каналĕ тĕлĕшпе каллех ют çĕршывсем пуç пулса тăмалли план йышăнтарасшăн пулнă. Çакна вĕсем Çĕнĕ Зеланди делегачĕн сĕнĕвĕпе витĕнсе тума хăтланнă. Анчах та хĕвеланăçĕнчи державăсен тĕллевĕ путланса ларнă. Çакă вăл Англири буржуалла хаçатсене питĕ тарăхтарать. Хăшпĕр хаçатсем СССР, Инди, Индонези тата Цейлон йышăннă позици Суэц ыйтăвне мирлĕн тата хăвăрт татса пама чăрмантарнă пек кăтартма хăтланаççĕ.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах буржуалла хаçатсенче ĕçе тĕрĕс хаклакан, вăйпа ирĕксĕрлемелли политикăна сивлекен, пĕр-пĕрине килĕштерсе решени йышăнма чĕнекен сасăсем те илтĕнеççĕ. Сăмахран, «Манчестер гардиан» хаçат çапла çырать: Инди тата унăн шухăшĕпе килĕшекен çĕршывсем хĕвеланăçĕнчи державăсен планĕсене хирĕç тăни çакăн çинчен калать: «Азири çĕршывсене халĕ ыттисемпе пĕртан çĕршывсем вырăнне хисеплемелле, вĕсемпе калаçса татăлмасăр решенисем хатĕрлеме, вĕсене çав решенисене вăйпа йышăнтарма çук», «Ку вăл тĕрĕс принцип», тесе çырать хаçат. Хаçат Англи правительстви Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çÿретес ĕçе йĕркерен кăларма хăтланнине те сивлесе çырать. «Конференцин ĕнерхи ларăвĕнче Англи ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ çапла каланă: Англи лоцмансене Суэц каналĕнчен чĕнсе илес шухăша ырламасть, тенĕ. Çак вăхăтрах правительство Суэц каналĕн халиччен пулнă компанийĕн ĕçĕсене тÿрре кăларма тăрăшать. Çак компани лоцмансене отпуск хыççăн ĕçе ан таврăнăр тесе ÿкĕтлет». Хаçат Англи правительствин çакнашкал позицине айванла позици тесе хаклать.

Лейбористсен «Трибюн» хаçачĕ Инди планне ырласа çырать. «Çак план,—тенĕ хаçатра,—Египет хăйĕн суверенитетне сыхласа хăварма тăрăшнине те, Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çÿретес ирĕклĕхе гарантилеме кирлине те шута илет. «Трибюн» хаçат çакна палăртать: Египета юнаса хăратмалли, хĕсмелли политика ăнăçлă пулас çук. Юлашкинчен хаçат парламента лейбористсен партийĕнчен суйланă депутатсене Англи Инди планĕпе килĕштĕр тесе татăклă требовани лартма чĕнет.

ШУПАШКАР. Висĕмкун Хĕрлĕ площадьре тимĕр клеткăсенчен тунă павильон ĕçлеме пуçларĕ. Çакăн пек павильон çитес кунсенче Ленинградски урамра уçаççĕ.
Ÿкерчĕк çинче: Хĕрлĕ площадьри павильонта.
А. Припалов фотоÿкерчĕкĕ.

Хастар хĕрача

Икĕ çул каялла Çĕнĕ Юнтапа ялĕнче нимĕнле культура çурчĕ те пулман. Ялти ĕçсыннисем кино е спектакль курма кÿршĕ яла—Йнкăлча çÿренĕ.

1954 çулта июль уйăхĕнче кунта библиотека уçаççĕ. Библиотека заведующийĕ пулма хастарлă комсомолкăна—М. Петрова юлташа уйăрса лартаççĕ.

М. Петрова юлташа малтанхи вăхăтра ĕçлеме çăмăл пулман. Анчах та хастарлă комсомолка йывăрлăхсенчен хăраса ÿкмен. Вăл, ялти активпа тачă ĕçлесе, колхозниксем хушшинче агитацилле-массăлла ĕçе анлăн сарса ярать. Хăшпĕр колхозниксем патне кайса тĕрлĕрен калаçусем ирттерет, çĕнĕ кĕнеке-журналсемпе паллаштарать. Нумай вăхăт та иртмест, библиотекăна çамрăксем те, ваттисем те йышлăн çÿреме пуçлаççĕ.

Библиотека çурчĕ кивĕ пулнă. М. Петрова ялти комсомолецсемпе çамрăксене библиотека çуртне илемлетсе тата юсасси çинчен калаçса парать. Часах унăн сĕнĕвне шута илсе библиотекăна пур енчен те йĕркене кĕртеççĕ.

Хальхи вăхăтра библиотекăна кĕрсен тухас та килмест. Стенасем çинче плакатсемпе витринăсем. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕн материалĕсем тăрăх йĕркеленĕ витринăра улттăмĕш пилĕкçуллăхра промышленноçпа ялхуçалăхĕ мĕнле ÿссе пымаллине тата колхозăн обществăлла хуçалăхĕ мĕнле аталанса пымаллине лайăх кăтартнă. Сăмахран, иртнĕ çулта «Коммунар» колхоз кашни ĕнерен вăтам шутпа 720 литр кăна сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал 1.600 литр суса илмелле, 1960 çулта вара 2.500 литр сĕт суса илме палăртнă. Колхоз июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.255 литр сĕт суса илнĕ. Ĕнесенчен ытларах сĕт суса илес ĕçре уйрăмах М. Павлова дояркă малта пырать. Вăл библиотекăран чи нумай кĕнеке илсе вулакансенчен пĕри шутланать.

Çавăн пекех библиотекăра «Пирĕн чи лайăх свиноводсем» ятлă фото-витрина пур.

Библиотека уйрăмах ялхуçалăхĕ çинчен пропагандăлас тĕлĕшпе нумай ĕçсем тăвать. Нумай пулмасть «Кукуруза Кольцовкăна килнĕ» ятлă тема тăрăх вулакансен конференцине ирттернĕ. Ку конференцине ирттерме библиотека чылай вăхăт хушши хатĕрленнĕ. Библиотекăра «Пире кукуруза мĕн парать» ятлă витрина тунă. Вулакансем хушшинче кукуруза çинчен калаçусем ирттернĕ, тĕрлĕрен кĕнекесем вуласа панă.

Конференцине Ф. Иванов комсомолец кĕске сăмах каласа уçнă. Унта пурĕ 8 çын тухса каланă. Вĕсем кукуруза тухăçлăхĕ çинчен, ăна колхозра ытларах акса тăвасси çинчен каланă.

Юлашки вăхăтра библиотека вулакансем хушшинче ĕçлессине чылай вăйлатрĕ. Унтан халĕ 280 çын кĕнеке илсе вулать, вĕсенчен 68 çын ватă колхозниксем. Уйрăмах, 88 çулхи К. Васильева, 70 çулхи А. Смиридонов тата Г. Афанасьев колхозниксене библиотекăра час-часах курма пулать. Сăмахран, К. Васильева кăçал «Эпир—совет çыннисем», «Пĕр хулара», «Одер çинчи çуркунне» тата ытти кĕнекесене те вуласа тухнă.

М. Петрова колхозниксене кĕнеке вулама панипе пĕрлех, ăна пропагандăлас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тăвать. Кăçал вăл М. Горький çырнă «Амăшĕ» кĕнеке тăрăх вулакансен конференцине ирттернĕ. Унта 12 çын тухса каланă.

Библиотека ятарласа кусса çÿрекен библиотека тунă. Ăна Г. Миронов юлташ йĕркелесе пырать. Çавăн пекех фермăсенче виçĕ çĕрте хĕрлĕ кĕтес тунă.

Хальхи вăхăтра кусса çÿрекен библиотекăран 73 çын кĕнеке илсе вулаççĕ.

Хастар хĕрача нихçан та ĕçсĕр лармасть. Ăна ялан колхозниксем ĕçленĕ вырăнта курма пулать.

Библиотекăн активĕ пысăк. Кашни ĕç кунта план тăрăх пулса пырать. Кăçал колхозниксене 13 хутчен лекци туса панă. Уйрăмах В. Муратов, В. Смирнов, И. Грачева юлташсем ирттерекен лекцийĕсемпе докладсене юратса итлеççĕ. Пултаруллă коллективĕ ĕçсыннисене концертсемпе спектакльсем лартса парать. Драма кружокĕ кăçал «Фермăра», «Пĕр семьере», «Шикли шикленĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ» тата ытти спектакльсем лартса панă.

И. КУЗЬМИН.

Канаш районĕ

Улатăрти типографире

Улатăрти типографи республикăри полиграфи промышленноçĕн пысăк предприятийĕсенчен пĕри. Кунта «Ленинский путь» хаçатпа пăравуссем юсакан заводра тухса тăракан нумай тиражлă «Паровозник» хаçата пичетлеççĕ, кĕнекесем чылай тухаççĕ. Акă, сăмахран, Чăвашгосиздат кунта «В. И. Ленинăн «Пĕр утăм малалла—икĕ утăм каялла», «Мĕн тумалла?», учебниксем, А. М. Горькин «Артамоновсем», Вилис Лацисăн «Çĕнĕ çыран патне», чăваш халăх поэчĕн Ухсай Яковĕн «Акăшкÿл», А. Эсхелĕн «Виçĕ туй» т. ыт. кĕнекесене пичетлесе кăларнă.

Типографи çĕнĕ техникăпа çултан-çул пуянланса пырать. Халĕ кунта пичетлемелли, набор тумалли çĕнĕ машинăсем пур.

Полиграфистсем ĕç тухăçлăхне пĕрмай ÿстерсе пыраççĕ. Августăн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăкри производство программине 100,1 процент тултарнă. Ĕçре уйрăмах Кудельксина, Кожаева, Хворов наборщиксем, Горожанина, Шестеркина, Грацилев печатниксем, Матвеевă, Паркина, Юкина переплетчицăсем паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна 150—200 процент тултараççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

СПОРТ

ЮЛТАШЛА ТĔЛПУЛУ

Çĕмĕрлери «Урожай» спорт обществин командипе Хусанти «Локомотив» обществăн команди юлташла тĕл пулса футболла вылярĕç. Вăйă никам çĕнтерейменнипе 1:1 шутпа вĕçленнĕ.

«Урожай» футболисчĕсем Арзамас облаçĕнчи «Трудовые резервы» спорт обществин командипе тĕл пулнă. Вăйăра 2:3 шутпа çĕмĕрлесем çĕнтернĕ.

ÇАМРАКСЕН ФУТБОЛ КОМАНДИСЕМ ЕНЕПЕ РЕСПУБЛИКА КУБОКНЕ ИЛЕССИШЕН

Ĕнер Шупашкарти «Энергия» спорт обществи стадионĕнче çамрăксен футбол командисем енĕпе республика кубокне илмелли çурма финалти вăйăсем пулчĕç. Чи малтанах Етĕрне хулипе Куславкка посёлокĕнчи çамрăксем ăмăртса вылярĕç. Етĕрне команди, 2:0 шутпа çĕнтерсе финала тухрĕ.

Канаш хулипе Шупашкарти «Динамо» спорт обществи футболисчĕсен тĕл пулăвĕнче шупашкарсем 2:0 шутпа çĕнтерчĕç.

Ыран кăнтăрла иртсен 2 сехетре «Энергия» стадионĕнче Етĕрнепе Шупашкар хулисенчи çамрăксен футбол командисем республика кубокне илессишĕн финалта тĕл пулса выляççĕ.

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

А. Герасимов Шупашкарти автотранспорт кантурĕнче шофер пулса ĕçлеме тытăннăранпа сахал мар çынна кÿрентернĕ: 1954 çулта ÿсĕр пуçпа пĕр çынна машинăпа сăптарса йывăррăн амантнă, иртнĕ хĕл Шупашкарти К. Маркс урамĕнче пĕр çамрăк ачана машинăпа таптатса вĕлернĕ. Çакнашкал киревсĕр ĕçсемшĕн 1954-çулта Герасимов шофера судпа та айăпланă пулнă.

Герасимов хăй те юсанма шутламан. Машинăпа çÿренĕ чухне вăл эрех ĕçмен кун та ирттермен. Нумай пулмасть Герасимов Советски районĕнчен Шупашкар хулине килме тухнă. Çул çинче машина çине темиçе пассажир лартнă. Вĕсенчен укçа пухнă та çула май темиçе магазина кĕрсе эрех ĕçме ĕлкĕрнĕ.

Хулана çывхарас умĕн Герасимов йывăрланса çитнĕ, хăй сисмĕлĕхне пăчах çухатнă. Шофер машинăна тытса пыраймн пулать тата çав тери хăвăрт пынипе машина канава çавăрăнса ÿкет. Машина çинче ларса пынисенчен пиллĕкĕшĕ йывăр аманнă.

Герасимов шофера тытса хупнă, ăна судпа айăплаççĕ.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

КИНО

«РОДИНА». Августăн 25-мĕшĕнче кăнтăрлахи сеанссенче илемлĕ фильм «За власть Советов», каçхи сеанссенче—«Деревенская девочка».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—5-99, обзорсен пайĕ—6-04, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—13-37, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 13207. Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2419. Тираж 29.600 экз.